*Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!*

# Капкӑн

№ 6

ийуҥ 1937 ҫ.



**ГЕОГРАФИ ТӐРӐХ ИСПЫТАНИРЕ**

— Иван Николайевич, учебник кӗнекинче каланӑ тӑрӑх, Ҫурҫӗр поԉусӗнче пурӑнакан никам та ҫук, халӗ унта пурӑнакан ҫынсем пур.

— Апла та, анчах учебник кӗнеки йанварӗнче тухнӑске-ха, халӗ пирӗн ийуҥ уйӑхӗ хамӑрӑн авиаци хыҫҫӑн чупма ӑстан ӗлкӗрен!

# Тăватă ҫтеналă тĕнче



Шур ҫитти сарнă сĕтел ҫинче ҫапҫутă сăмавар пăс кăларса ларать. Ашшĕпе амăшĕ хурăн ҫырли варенипе чей ĕҫнĕ, тутлă шăршă кăларакан ҫăмарта кукли ҫинĕ хушăра мĕн-мĕн ҫинчен калаҫкаласа илнине Мишша ытти чухнехи пек итлемест. Умне лартса панă чейĕ те унăн сивĕнсе кайнă. Чӳречерен сăмавар ҫине ӳкекен хĕвел пайăрки Мишша аллинчи хаҫатăн „Ҫурҫĕр полюсĕнче пирĕн тăван ҫĕршыв йалавĕ вĕлкĕшет“ тесе ҫырнă тĕлте выляанать.

— „Ҫурҫĕр полюсне кайакан експедици нумайччен ҫула тухма хатĕрленнĕ“,—куҫĕсене ҫутăлтарса малала вулать Мишша.

Вăл вуланă хушăра ашшĕпе амăшĕ урăххи ҫинчен сăмах ҫаптаркаласа ларасҫĕ:

— Верăчкă! Есĕ ҫуралнă паха кун ҫитнĕ йатпа хăнасем пухма хатĕрленмешкĕн укҫам ҫителĕксĕртерех-ха,—тет ашшĕ вазăран хурăн ҫырли варени ăсса илнĕ май.

Сылтăм ҫтена ҫумĕнче йалтăртатакан тĕкĕр ҫинче Мишша амăшĕ ҫӳхе тутине тăсни курăнать.

— Шăратнă ҫупа шурă ҫăнăх туйанса хурсан, ыттине кайран та илме пулать,—тет амăшĕ кăштах кăмăлсăртарах пулнă сасăпа.

— „Советсен Ҫурҫĕр полюсĕнчи станцийĕ ҫанталăка сăнаса пырĕ,—вулать малала Мишша.—Кунсăр пуҫне унта магнит сăнавĕсем тумала, пăрсем ăҫтала мĕн таран хăвăрт куҫса тăнине тĕпчемеле, пăрлă океанăн тарăнăшне виҫсе пĕлмеле, океан варринче мĕн чухлĕ пурăнма май пуррине палăртмала. Ҫурҫĕр полюсĕнчи ҫанталăка сăнаса, вĕренсе пырас ĕҫ...“

— Лайăх торт пĕҫерме вĕренсе ҫитеймерĕм-ха, тет амăшĕ ачи вуланине итлемесĕр.—Ыттине хамах пĕҫерĕп...

— „Куҫса ҫӳрекен пăр ҫинче хĕл каҫма калама ҫук паха тĕклĕ тумтирсем илнĕ. Кĕпе-йĕм пăлан тирĕнчен, тĕкĕсене шалала туса ҫĕлетнĕ“... вулать Мишша.

— Пурҫăн платйе унччен хатĕр пулмасан, пĕтерет мана портнихă.—Хăнасем умĕнче ҫĕнĕ фасонлă платйĕсĕр мĕнле ҫӳрес? — тет арăмĕ упăшкин кăмăлне куҫĕнчен пăхса пĕлме хăтланса.

— „Куҫса ҫӳрекен ҫурта, тепĕр майлă каласан, палаткăна тăватă сăйлă тунă: пĕрремĕш сăйĕ— брезент, иккĕмĕшпе виҫҫĕмĕшĕ — гагар мамăкĕ, тăваттăмĕш—каллех брезент...

— Ташлама пирĕн хваттер пĕчĕкрех-ха,—тет арăмĕ, чей тултарса.

— Хамăрпа йунашар пӳлĕме йышăнакан Ҫидăрăв пульницăра уйăха йахăн выртать. Хăҫан вилесси паллă мар. Вилсен пӳлĕмне хамăра валлы йышăнса, хватере аслăлатас ĕмĕтĕм пурччĕ!— тавăрать упăшки, вилеймен Ҫидăрăв ҫине тарăхн сасăпа.

— „Палаткăран инҫете тухса ҫӳреме шухăшла мастпăр“... вулать малала пит интересленнĕ Миш ша.—Пăр ҫурăкĕ пурри сисĕнсен, вăл ҫурăк ăҫта пуҫланса ăҫта пĕтнине сăнамала пулать. Инҫете тух са ҫӳреме пирĕн вăхăт пулас ҫук, мĕншĕн тесен...

— Отпускра канма Крыма кайма та чылай укҫ кирлĕ. Хăнасем пухма та чылай укҫа тухать!— шухăша кайать Мишшан ашшĕ.

— „Куҫса ҫӳрекен пăрпа ăҫтала ҫавăрăнс ҫӳресси халĕ паллă мар-ха. Епĕр ларнă пăра ыт ти пăрсем хĕсме тытăнсан, пирĕн хамăрăн палат кăна урăх пăр татăкĕ ҫине куҫарса лартма тивĕ“.

— Путьовкине памĕҫ-ха,—тет упăшки хайĕ шухăшне татах малала тăсса.—Пурăнатăп—ника ма та тĕртĕнместĕп. Службăра мĕн-мĕн хушни сене пурне те тăватăп. Кăтартнă ҫулпа ҫӳретĕп Ҫапах ман ҫине чалăш куҫпа пăхакан та пур.

— „Мунча (ваннăпа душ) ҫинчен нумайлăхах манмала пулать,—вулать малала Мишша.—Ним т тăваймăн, мĕншĕн тесен пĕр витре шыв тум Арктикăра 7—8 витре йур ăшăтмала пулать. Хут мали йапаласем мунчасем кĕме шыв ăшăтмалăхах ҫук. Ҫийĕнчен тата пирĕн палаткăра ҫăвăнма т сивĕ пулать...

— Санаторине кайма кăна врачсен комиҫҫинче мĕнле чирпе чирлени ҫинчен хут илмеле, канмали ҫурта кайма ун пек хут кирлĕ мар. Есĕ вĕт.. Крыма, шыва кĕрсе канса пурăнма ҫеҫ кайатăн сывалас-тăвас тĕлĕшпе мар,—тет арăмĕ йуратн упăшкине лăплантарса.

— Хăратăп-ха,—тет ăна хирĕҫ упăшки.

— Мĕнрен хăратăн?—тилмĕрсе пăхать унăн ку ҫĕнчен арăмĕ.

— Иртнĕ ернере пулнă пуху протоколне пайа ҫтена ҫине ҫапса йанă. Протоколне вуларăм та.. унта пренире кам-кам тухса каланине асăнман та

— Асăнмасан мĕн вара?

— Ара кам та пулин пуҫлăха: пухура сана в та критиклерĕ, тесе ман ҫинчен суйса кăтартсан.. пуҫлăх умĕнче мĕнле майпа тӳре тухайрас? Про токол ҫине кам-кам тухса каланине ҫырнă пулсан пухура епĕ ҫавар уҫманнине пĕлме протокол ҫине ҫеҫ пăхăр,—тесе калама пултараттăмчĕ.

— „Епĕр Ҫурҫĕр полюсĕн етем пĕлмен, ĕмĕрхи ĕҫĕсене пĕлме тивнĕ чыслăхшăн пĕтĕм чĕререне савăнатпăр“, — вулать Мишша.

— Ёнер пулнӑ пухура мана тӳлевсӗр ӗҫлемели вырӑна суйланӑ. Тфу! Кам айӑплӑ? Хам айӑплӑ! Уборнӑйсем таса марри ҫинчен тухса каларӑм та, чей ӗҫме тесе киле таврӑнтӑм. Хам ҫук пулин те, кайран, суйлавсем вӑхӑтӗнче, мана санитар комиҫҫи членне кӗртнӗ.

— Сана миҫе хут каланӑ: „пухува кай, анчах нимӗн те ан шарла,—ахалӗн сана пӗрпӗр ӗҫе суйласа хураҫҫӗ“ тесе! Калани тӗрӗс пулчӗ.

— „Епӗр ҫӗнтеретпӗр. Ҫурҫӗр полюсӗнче хамӑрӑн тӑван ҫӗршыв йалавӗ вӗлкӗшет“ тенипе пӗтрӗ Мишша вуланӑ статйа.

Лутра ҫын лутка ҫурӑ ӗҫет, теҫҫӗ. Мишша ашшӗ, лутра ҫын пулин че, чейне лутка ҫурӑ ӗҫмерӗ, 7 стакан ӗҫсенех тӑранчӗ.

Ҫанталӑк йӗпе тата сивӗ тӑнӑ пирки, Атӑлӑн лешйенне уҫӑлса ҫӳреме кайма май килменни ҫинчен калаҫкаланӑ хыҫҫӑн, Мишшан ашшӗпе амӑшӗ сӗтел хушшинчен пуҫтарӑнса тухрӗҫ. Мишша хаҫатне хурса журнал тытрӗ. Журналта пичетленнӗ „Мешченлӗх“ статйана вулама тытӑннӑччӗ кӑна, алӑка шакканӑ сасӑ илтӗнчӗ.

Паллана сасса илтсе, Мишша амӑшӗ шалтан питӗрнӗ алӑка уҫса йарса:

—Килех, килех, Марйе Петровнӑ!—терӗ.

Унччен те пулмин пӳрте капӑр тумланнӑ, кӑтра ҫыр ҫӳҫлӗ, шапшур пӗчӗк аллине „Моды Парижа“ журнал тытнӑ хӗрарӑм кӗрсе, пурне те сывлӑх сунчӗ. Пӳрте розӑ чечекрен тунӑ духхи шӑрши сарӑлчӗ.

**Иван Мучи.**

# ХӐПАРТУ

*Чӑвашсен писатӗлӗ Арис вунӑ ҫул кайарах „Йӳссе хӑпарат“ йатлӑ роман пӗҫерме тесе чуста хурса лартрӗ. Анчах чусти халӗ те йӳссе хӑпараймасӑ пулас, ҫавӑнпа романӗ те пиҫсе тухаймасӑ.*

Пурӑннӑ тет ӗлӗк-авал пӗр ватӑ старик. Пурӑнсан, пурӑнсан ҫак старикӗн хӑпарту ҫийесси килнӗ. Вӑл кӗлете тухса ырҫа тӗпӗнчен лӑпах пӗр савук ҫӑнӑх шӑлса пухнӑ та, унтан чуста хурса лартнӑ.

Старикӗн чусти, сехетпе мар, минутпа йӳссе хӑпарнӑ. Старик савӑннӑҫемӗн савӑннӑ. Кӑмакине хутма тӑнӑ, анчах унӑн вутти пулман.

Старик кӗрӗкне тӑхӑннӑ та, вӑрмана вут касма тухса утнӑ. Нумай та кайман, вӑл пӗр хӑрӑк йӑвӑҫ патне ҫитнӗ. „Йепле манӑн телей пысӑк, ку йӑвӑҫ пӗр ернелӗх ҫитӗ“,—тенӗ старик.

Старик йӑвӑҫа касма хатӗрленнӗ, анчах унӑн пурти пулман—пуртине вӑл килне манса хӑварнӑ. Нумай та шутласа тӑман старик, хӑрӑк турачӗсене хуҫма тесе тӳрех йӑвӑҫ тӑррине хапарса кайнӑ. Сасартӑк, унӑн ури айӗнчи турачӗ хуҫӑлса кайнӑ та, старик ҫӗре персе аннӑ.

Шӑнсах вилнӗ пулӗччӗ старик. Ыр, унӑн телейне пула ҫав йӑвӑҫ кутӗнчен ҫынсем иртсе пынӑ та, ӑна курах кайнӑ. Вӗсем ҫурри вилӗ старике пулъницана кайса леҫнӗ.

Пулъницара вунӑ кун выртсан, старик сывалса килне таврӑннӑ, вунӑ кун маларах хурса лартнӑ чустине пӑхнӑ. Анчах унӑн чусти пӑнтӑхса кайнипе, хӑпарту пӗҫерме йурӑхлӑ пулман. Старик нимӗн тума аптӑраса чустине сысни пане, сысни нӑрик-нӑрик тунӑ та, калла ҫаврӑнса кайнӑ.

Старик тарӑхсах ҫитнӗ, пӑнтӑхса кӑвакарнӑ чустине илнӗ те хӑйӗн йыттине панӑ. Анчах йытти те хам-хам! тесе ҫеҫ вӗрсе илнӗ те чустине ҫимесӗрех ҫенӗх айне кӗрсе выртнӑ.

Шалтах тарӑхса ҫитнӗ старик. Хӑпарту валъҫи ҫӗнӗрен чуста хурас—ырҫа тӗпӗнче пӗр пӗрчӗ те ҫӑнӑх йулман. Нимӗн тума аптӑранӑ старик кӑвас чӗресӗ умне ларнӑ та, куҫҫулӗпех йӗрме тытӑннӑ.

**Куҫма Чулкаҫ.**

# ХӐЙПЕ ПӖРЛЕХ ЛАРСА
## халӑх тӑшманӗ ӗҫленине сисеймен пуҫлӑх

В. Филиппӑв ӳкерчӗкӗ.



**— Епӗ хамӑр учрежденире сана кашни кунах курнӑ. Анчах мана... сана курмасӑр йулнӑ,—тесе айӑпларӗҫ. Мӗнле-ха апла, тӗлӗнмеле. Сана епӗ йаланах курнӑҫке...**

# ТИМСĔР ТИМĔРККЕ

Савăтри Тихăнав инженерăн йăмăкĕ Йеленă килнĕ йатпа вечĕр пекскер пулчĕ. Ĕçкĕ-çикĕ... Тутлă калаçу. Çурхăлаçлă хуткупăс çурçĕрчченех çухăрчĕ. Гитарă танкăлтатрĕ. Балалайкăсем те тĕнкĕлтетрĕç. Хăнасем мĕн кирлĕ таранах ĕçкелерĕç, çикелерĕç. Йулашкинчен: „Çитет! Килнипе те пулмĕ, кайас та пулĕ,—тесе куçран куçа пăхса кулкаларĕç те, Тихăнăва ырă каç сунса хăварнă май, кашни хăйсен хăватерĕсене саланма хатĕрленчĕç.

— Ну, сывпулăр кĕçĕрлĕхе,—терĕ Тимĕркке те, ыттисемпе пĕрлех, Тихăнăвпа Йеленăна ал парса.—Курнăçăпăр-ха малашне те...

—Чим-ха! Кĕтĕр ха кăштах,—терĕ Тихăнăв. — Хамăрах ăсатса йарăпăр сире. Кайатпăр вĕт, Йеленă? Уçăлса килетпĕр.

— Епĕ хатĕр,—терĕ Йеленă.

Вара вĕсем, хăнасемпе пĕрлех, тĕрлĕрен кăмăла çĕклентерекен сăмахсемпе çăмăллăн калаçнă май, тула кĕпĕрленсе тухрĕç.

Йеленă... Пур йенчен те килĕшӳлĕ Йеленă Тимĕрккепе йунашарах утса пычĕ.

— Аван! Питĕ лайăх савăт ку сирĕн...

— Начар мар,—терĕ Тимĕркке.—Кичемех пулас çук кунта сана, халиччен тĕрлĕ хуласенче пурăннă пулсан та. Акă, кунтан инçех те мар—пĕве, вăрман хĕрринче. Пирĕн пĕве çинче пулман-ха есĕр?

— Çук çав,—терĕ Йеленă, куçĕсене Тимĕркке çинчен илмесĕр.—Вăл пĕве пирки мана пичче те çырса пĕлтернĕччĕ. Кĕçĕр пулаймастпăр-и унта епĕр?

— Килĕшетĕр пулсан, мĕншĕн йурамасть?—терĕ Тимĕркке, кăшт чĕтревлĕрех сасăпа. Çавăнтах йĕри таврала пăхса илчĕ вăл. Хăйсемпе пĕрле тухнисем чылай лереле кайнă: „Иксĕмĕр çеç-и?.. Чăнласах иксĕмĕр çеç-и?“—тейекен шухăш çавăрăнчĕ унăн пуçĕнче. Вара утрĕç вĕсем. Пĕве хĕрринчи сак çине часах çитсе ларчĕç. Урăх никам та çук. Çанталăк йанкăр уçах мар. Каçхи апат йенчен кăштах сулхăм çил вĕрет. Пĕве çийĕ хумханать... чӳхенет. Тимĕркке чылайччен путлĕ сăмах тупаймасăр, ларчĕ. „Есĕ çав хĕреслĕ урамри пусă вăлашкине курнă-и?—тесе ыйтрĕ, тет. Курнă, терĕ тет хĕрĕ. Çав вăлашкана епĕ ăсталăса тунă ĕнтĕ, тесе каларĕ тет арçынĕ. Апла есĕ платник иккен, терĕ тет хĕрĕ. Платник çеç те мар, çăпата тума та пĕлетĕп епĕ, терĕ тет арçынĕ“. Çавăн пекех пулчĕ кĕçĕрхи Тимĕркке те:

—Пайан çеç тухнă савăт хаçатне курайнă-и есĕр?—тесе йăвашшăн, каллех чĕтревлĕ сасăпа ыйтрĕ вăл.

—Курнă-çке... Вуларăм,—терĕ Йеленă.—Санăн сăнӳкерчĕкне те куртăм. Автобиографипе те паллашрăм.

—Çапла, çамрăк чух кĕтӳçĕ пулнă епĕ. Комсомол çеç мана çын турĕ. Хамăн хастарлăхăма кура çеç сак ирĕклĕ çĕршывшăн кирлĕрен те кирлĕ продукцисем кăларакан савăтри ответлă работник—комсомол комитечĕн çекретарĕ пулма пултартăм...

Çапла пуçланчĕ паллашулă курнăçу. Ытлашши нимĕнех те мар пек.

Хайхи Йеленă тепĕр ирхине, ĕç пуçлансанах комсомол комитетне пырса кĕчĕ. Кĕнĕ-кĕменех ăна Тимĕркке çемçе диван çине ларăн пачĕ.

— Каçарăр! — терĕ вăл, Йеленă умне кулътурлăн тайăнса,—ӳсĕр çыннăн чĕлхи урă çыннăннинчен те усалрах, теççĕ вĕт, çавăн пек, ĕнер каç ытлашширех калаçнă пулас епĕ, каçарăр.

— Çук-çке. Аванах калаçрăн-çке, — терĕ Йеленă. — Епĕ çав ыйтупа килтĕм... ĕнер каç калаçнă ыйтупа.

— Йурать-ха, ăна тăвăпăр халех,—терĕ Тимĕркке. Çавăнтах сĕтел сунтăхне уçса кирлĕ хутсем шырама пуçларĕ. Ĕнер каç, пĕве умĕнче уйрăлас умĕн, пĕр хуйхăлă хыпар пĕлтернĕ пулнă ăна Йеленă:—Килнĕ чухне вакунра, хам çывăрса кайсан, аван мар ĕç пулса иртрĕ,—тенĕ вăл,—Çаратрĕç. Ытти документсемпе пĕрлех комсомол билечĕ те çаратакан аллине кайнă“. „Мĕнле-ха?—кулса çеç йăвашшăн ыйтнă Тимĕркке.—Пиччӳне те çаратнăччĕ çавăн пек... Тĕрĕсрех каласан, пысăках хуйхă мар вăл. Ыранах пыран ак. Билечĕн номĕрне те астăватăп, тетĕн. Ыйту çырăпăр та, райкомол урлă наччасах çĕнĕ билет илме пултарăпăр“. „Тем пекехчĕ... Питĕ аван пулĕччĕ,“—тенĕ пăхмассерен кулса тăракан кăвак куçлă Йеленă. Пайан та вăл çавнах каларĕ. Тимĕрккене тем пекех тав туса хăварчĕ.

Унтанпала пĕр çулталăк иртрĕ. Çак çулталăк хушшинче тутлă калаçусемпе канлĕ каçсем Тимĕрккене сахал мар парнелерĕ çĕнĕ билетлă Йеленă. Ытла та çăмăлскер вăл. Пур ыйтусемпе те тĕплĕн интересленет. Пур ыйтусем çине те Тимĕрккерен татăклă ответсем илет. Савăтри кĕме йураман корпуссене те Тимĕрккепе пĕрле нимĕн чăрмавсăрах кĕрсе кайать вăл. Пурне те пĕлтерме йураман ыйтусене сӳтсе-йавакан ларусенче те Тимĕрккепе йунашарах тенĕ пек ларать. Вăхăчĕ-вăхăчĕпе чылайлăхах таçта кайса пурăнать Йеленă. Тимĕркке станцăна çитиех ăсатать ăна. Куçран çухаличченех аллинчи шурă тутрипе саламлăн сулласа йулать. Йеленă тепĕр ернеренех килет. Тимĕркке ăна хирĕç тухса илет. Чечек çыххи тыттарать. Çĕнĕ хыпарсем пĕлтерет, çĕнĕ ыйтусем парать.

Çапла. Питĕ аван. Кăвак куçлă Йеленăпа ытла та килĕшӳлĕ пурăнатчĕ пирĕн Тимĕркке. Ăна качча илетех те пулĕ, тейекен хыпар та сарăлнăччĕ савăтри çамрăксем хушшине. Чăнласах та епĕ ăна илсен, пирĕн пурнăç мĕнле çеç телейлĕ пулмĕ-ши,—тесе ĕмĕтленнĕ Тимĕркке хăй те.

Анчах:

— Тăхта-ха, авланасси кайран та пулĕ,—тенĕ ăна пĕр сотрудник, хăй патне чĕнтерсе.—Кама аслă çул уçса панă есĕ?... Кама хӳтĕлесе усранă?.. Шпионкă вĕт?

— Йеленă-и?.. Пиччĕшĕ те-и?.. Инженер...

— Пиччĕшĕ те пулмасăр... Пĕркунхине çухалнă савăтăн никам пĕлмеле мар планĕ кам аллине лекнĕ, тетĕн есĕ? Нумай пулмасть савăта кисретнĕ авари кам урлă пулнă тетĕн? Сана хăвна та хăйсем пекех тăвасшăн пулнă вĕсем... тунă та.

Тимĕркке ăнланчĕ. Тимсĕрлĕх... Акă ăçта илсе пырать вăл тимсĕрлĕх.

**Митта Петĕрĕ.**




## Куславкка районĕнчи Муркарта

„Çĕнтерӳ“ колхоз председателĕ хăйĕн çекретарĕпе каласса лараҫ.

— Вăхăт мĕнле вара питĕ хăвăрт иртсе пыраҫ!

— Ма?

— Пире нумай пулмасҫ тырпул пуçтарса кĕртес ĕçе хатĕрленменшĕн хаçатра ислетсе илнĕччĕ. Пайан килнĕ номĕре вуларăм та: çавăншăнах кăçал та çунтарса çырнă. Малтан ислетсе илнĕ вăхăтранпа çулталăк çитнĕ те пулаҫ.

## Çула мунча кĕме йуратман йапăх

— Епĕ пайан 75 пус укçа тупрăм.

— Ăçта? Урамра-и?

— Мар. Килтех. Мунчана кайма вăхăт çитнĕ пулин те, каймарăм, кĕпе-йĕме килтех улăштарса тăхăнтăм. 75 пус билет укçи хам кăсйере йулчĕ.

## Чăвашиздат гонорарĕ

— Епĕ Чăвашиздатра гонорар вăхăтра илтĕм.

— Суйатăн?!

— Суймастăп.

— Суймастăн пулсан... тĕлĕк курни çинчен калатăн.

## Кĕтсе лараҫ

Хăшпĕр вырăнсенче çырмали перасем çуккипе аптранă.

— Кнопкин йулташ! Ма ĕç вăхăтĕнче нимĕн ĕçлемесĕр ахаљ ларатăн?

— Ман перана председател çырма илчĕ. Председател хыççăн илме тата виç-тăват çын çырăннă. Пайан, телей çуккипе, ĕçлеме май тухмасҫ пуљ.

## Кам-мĕнне пăхмасăр

Курйер:—Ăнлантарăр-ха, Иван Çергейĕвич: „Кам-мĕнне пăхмасăр критиклемеле“ тенĕ лозунг мĕне пĕлтерет?

Управдел:— Вăл-и? Вăл наркома, йе начаљнике çеç мар, мана та критиклеме пултарнине пĕлтерет.

## Хăнкăларан хăтăлайман çын ачи

Учител:—Чăхсем мĕскер усă кӳреççĕ?

Вĕренекен:—Чăхсем çăмарта тăваççĕ, чĕпĕ кăлараççĕ, пуссан аш пулаҫ...

Учител:—Тата? Ну? Астуса ил-ха—çывăрма выртсан мĕн пулаҫ санăн пуçелĕкре?

— Хăнкла, учител йулташ!

## Пахалăхĕ начар

— Николай Никитич, ма есĕ чуллă урампа çӳренĕ чухне урусене кушак пек çемçен пусса утатăн?

— Кожупрйажрен виçĕмкун илнĕ çĕнĕ атă çĕтĕлесрен сыхланатăп.

## Вечĕрта

— Кам çав кĕрнеклĕ етем?

— Çавна та паламастăн-и? Вăл Халранкай хушаматлă писател. Йулашки çулсенче вăл хăвăрт ӳссе карĕ.

— Романсем çыраҫ-и?

— Романран та ытларах. Ыттисем çырнă роман кĕнекисем умĕн пичетлеме умсăмахсем çыраҫ.

## Йапăх ĕçлекен председател

Кăнтăр кану вăхăчĕ. Илйин счетовод йулташĕнчен ыйтаҫ:

— Итле-ха, йулташ, кам пирĕн местком председателĕ, пĕлместĕн и?

— Кам? Çавна пĕлместĕн-и? Намăс! Местком председателĕ—хăвăр суйласа лартнă етем, вăл—актив. Ун авторитечĕ питĕ пысăк пулмала. Местком председателĕ промфинпланшăн, ĕç пахалăхшĕн кĕрешессине пуçаракан, вăл—авангард...

— Тăхта-ха, тăхта-ха...

— Тăхтама кирлĕ мар. Местком председателĕ камне те пĕлменнине тӳсме çук. Тата... служăщчисен сарлака массисем пĕлмен местком председателĕ вăл—йапăх председател шутĕнче тăраҫçке-ха. Апла есĕ мана...

— Тăхта-ха, тăхта, тетĕп! Ман çине ма сиксе ӳкрĕн ха. Кам есĕ?

— Епĕ-и? Епĕ—местком председателĕ.

## Трак районĕнчи Йанкасра

Йанкас йалсоветне тĕксĕм куçлăх тăхăннă етем кĕрет.

— Сана кам кирлĕ?—ыйтаҫ унран шăпăр тытнă пĕр хĕрарăм.

— Йалсовет председателĕ Арçентйĕв кирлĕ.

— Вăл çав сĕтел хушшинче лараҫ. Анчах халĕ çук-ха вăл. Виçĕ кун ĕнтĕ, ĕçке кĕрсе ӳкнĕ пирки, ĕçлеме килмерĕ.

— Замеçтителĕ ăçта?

— Замеçтителĕ авă çав чернилницă хыçĕнче ĕçлет. Анчах вăл та пайан килеймерĕ-ха...

— Апла пулсан йалсовет çекретарне курса кайасчĕ.

— Вăл, авă, çав сĕтел хушшинче лараҫ. Вăл та таçта тухса кайнă.

Пынă çын хăйĕн тĕксĕм куçлăхне сăмси çинчен илсе калаҫ:

— Епĕ суккăрчĕ. Халĕ ĕнтĕ лайăхах куракан пултăм,—тет.

— Мĕн куран?—ыйтрĕ шăпăр тытнă хĕрарăм.

— Кунта йалсовет мар... ĕçлеме пултармансене тăрантаракан çурт иккен,—терĕ çуртран кайала тухма хăтланса.




## Тĕрĕс мар

Пĕр районра халăх сутйи пулман, тейĕпĕр. Мĕн тăвас? — ыйтнă хăйĕнчен хăй райĕҫтăвком председателĕ Носков йулташ. Унтан кăшт шухăшласа ларнă та:

— Ионăв, — кăшкăрнă пӳлĕмрен ҫекретарне вăл, — халех президиум членĕсене пуҫтар. Президиум ларăвĕ туса иртерер! — тенĕ сĕтел ҫинчи хут купи ҫине пăхса.

Нумай та вăхăт иртмен, председател пӳлĕмне ик-виҫĕ ҫын пырса кĕнĕ.

— Райĕҫтăвком президиумĕн ларăвĕ уҫăлнă, тесе шутлатăп. Кун йĕрки ҫапла... пирĕн халăх сутйи ҫук, ҫавна суйламала.

Пуҫтарăннисем калаҫман, Носков калаҫнине ҫеҫ итлесе ларнă. Кăшт калаҫкаланă хыҫҫăн ҫакăн пек постановлени йышанас-и, тенĕ Носков йулташ. Епĕр вăл постановленине пĕтĕмпех пичетлетпĕр.

**Ҫĕмĕрле райĕҫтавкомĕн 1937-мĕш ҫулхи майăн 4-мĕшĕнче пулса иртнĕ ларăвĕн 22 № постановленийĕ**

„Халăх сутйине суйласси (Носков йул. доклачĕ)“

Райĕҫтавком президиум ларăвĕ ҫакăн пек постановлени йышăнат:

Районри халăх сутйине, Ҫĕмĕрле районĕнчи Йекоркинă йалĕнче пурнакан Аниҫимăва Дарйе Николайĕвнăна суйлас тата Ҫутĕҫ халăх комиссариатĕнчен ҫак постановленийе ҫирĕплетме ыйтас.

Райĕҫтавком председателĕ Носков
Ҫекретарĕ Ионăв

Ҫĕмĕрле, 1937-мĕш ҫул, майăн 4-мешĕ

Носковăн халăх сутйисене суйласси тата вĕсене камсем ҫирĕплетесси ҫинчен Конституцире мĕн каланине колхозниксенчен ыйтса пĕлмеле. Носков й. Конституци йĕркине пăсни ҫинчен те вĕсемех каласа парĕҫ.

Й Муратăв.

## Шăлпа ĕмĕр

Шупашкарти поликлиникăна виҫ-тăватă хут ҫитсен шăл кăларакан кабинета аран лекме тиврĕ.

Креслă ҫине ларсанах шăл кăларакан хирург ҫутă хĕскĕчпе умма пырса тăчĕ.

— Ку шăла кăларма кирлĕ мар, тӳрлетсе пломбă хумала пулат, — терĕ хирург ыратакан шăла пăхсан.

Тытăнчĕ вара Чекуровă тухтăр шăла машинăпа чашкăртма. Пуҫмими витĕр ҫӳлеле хĕм сирпĕнĕн туйăнат. Пĕчик йĕп ҫăрти пысăкĕш хуралнă шăла виҫĕ кун хушшинче виҫĕ хут пăраласа кантăр вăрри пĕрчи кĕрсе выртмалăх шăтăк турĕ.

Виҫĕ хут кайнă хыҫҫăн шăл хăвăлланса кайрĕ. Шурă йапалапа тултарса сĕрсе лартрĕ.

— Ку вăхăтлăх пломбă. Тепĕр вунă кунтан килĕр! — тесе ăсатрĕ вăл мана.

Икĕ кунтан вăхăтлăх пломбă хĕрĕнчен катăлса тухрĕ. Вăл йенчи шăлсемпе чăмлама май ҫук.

Вунă кун ҫитсен, хайхи шăла Чекуровă тухтăр тепĕр хут хăйраса тасатса ҫĕнĕрен пломбă хучĕ.

— Вăт пулчĕ. Ку ĕнтĕ хăвăр ĕмĕре пырат, кирек мĕн те чăмлама йурат вăл шăлпа, тесе ăсатрĕ мана Чекуровă йулташ.

Лăплантăм. Шăл ыратмаст, анчах Чекуровă йулташ манăн ĕмĕрĕм питĕ кĕске пуласса ĕмĕтленнĕ, — пломбă виҫĕ кунтан катăлса тухрĕ. Хам халĕ те пурăнатăп. Мĕне кура тухтăр манăн ĕмĕр виҫĕ куна ҫеҫ пымала, тесе шухăшланă-ши, пĕлесехчĕ, чирлисене сиплекен Капкăн йулташăм!

М. Ваҫильков.

## „Ухмаха тухнă“ хут

Шупашкар райĕҫтăвкомĕн сывлăх пай пуҫлăхĕ Иванов Тихăн пăхмали срокĕсем иртнĕ жалăбăсене пҫихо-колонине сывалма йарат. Ĕненместĕр пулсан вăл Чăваш Тĕпĕҫтăвкомĕн прийомнăйне апрелĕн 28-мĕшĕнче йанă хута вуласа тухăр. Акă вăл хут (епĕр унăн сăмахĕсене улăштарас мар тесе вырăсла ҫырнине чăвашлана куҫармасăрах пичетлес терĕмĕр):

В приемную ЦИК Чуваш АССР.

Настоящим Чебоксарский райздравотдел ставит в известнось, что (жалăба)—письмо гр-на Николаева Феодора Николаевича об устройстве его брата Николаева Якова Николаевича на лечение с резолюцией зам. пред ЦИКа Чув. АССР тов. Харитонова нами 28 апреля с/года направлено в город Горький психо-колонию им. Лядова на лечение.

Зав. Чебоксарским районным отделом
Здравохранения Иванов.

„Николайĕв Йакăва йатăмăр“ тесе ҫырас вырăнне, Николайĕв Федăр ҫырune Горйкинчи пҫихо-колонине сывалма йатăмăр“, тенĕ. Епĕр Шупашкар райĕҫтăвкомĕнчен жалăбăсене вăхăтра пăхма ыйтатпăр, ухмаха тухса кайиччĕнех ан тытса тăрăр, тетпĕр.

А. М.

---

# Лисук

„Партизан“ колхоз председателĕ Курак Куҫми пайан килне питĕ кăмăлсăрланса таврăнчĕ. Вăл арăмĕ калаҫу пуҫласа йарасса кĕтсе пайтахчен уткаласа ҫӳресе пирус мăкăрлантарчĕ, шыв сыпнă пек ҫăварне уҫасшăн пулмарĕ. Арăмĕ апат хатĕрлесе пĕтерсен, сăмах чĕнмесĕрех сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕ.

Какай йашки пĕтнĕ ҫĕре текех чăтма пултараймарĕ Курак:

— Парторг патĕнче пултăм, хай чĕнтерчĕ.. — терĕ вăл йашки вырăнне умне котлет тарилкки илсе лартса.

„Ыттине хăйех ыйтса тĕпчетха ĕнтĕ ку“—çăмăллăн сывласа илчĕ вăл.

Анчах арăмне те темĕн пулнăçке пайан? Чĕлхе çине çăпан тухса ларман пулĕ те? Ытти чух сăмах ваклама йуратакансккр, халĕ вуçех те калаçасшăн пулмарĕ вăл:

— Çимун патĕнче-и? Аплаç... Котлет аван пулни? Хăнăхсах çитеймерĕм пулас-ха пĕçерме...

Курак Куçми котлет тарилкки вырăнне, умне кĕсел стаканĕ илсе лартрĕ те, каллех калаçу тапратма хăтланса пăхрĕ:

— Аванах йатларĕ...

— Çимуни-и? Ара пулат̆ вăл ун пекки... Тути-маси пур-и кĕселĕн? Ыран виççĕмĕшне кофĕ вĕретес пуԓ-ха...

Çук, текех чăтса лараймарĕ Курак:

— Районри хаçатра ман пирки заметкă тухнă. Начар ĕçленĕшĕн йатлаççĕ. Темĕнле „Л—ук“ тенĕскер çырнă. Ԓавук пулмала... Çимун йатлама чĕнтернĕ пулнă.

Тинех татса карĕ пĕве:

— Заметкăна Ԓавук мар, епĕ çырнă. Ԓавук çырнă пулсан „Л—ук“ мар, „Ԓ—ук“ пулĕччĕ. „Л—ук“—Лисук тени пулат̆ вăл. Заметкăра сана тивĕçлипе йатланă. Çум çумлас ĕçре социалисăмлă ăмăрту пуçарса йарассипе мĕн те пулин турăн-и? Нимĕскер те туман. Уйра ĕçлекен колхозниксем ваԓԓи хаçатжурналсем çыранса илни? Çук. Уйри стана радио лартни? Лартман. Ăна та, кăна та, лешне те туман. Пухусенче критĕкленисене пурне те шута илмерĕн. Чăнах та йапăх ĕçлетĕн есĕ. Заметкă пирки нимĕн ӳпкелешмели те çук. Ӳлĕмрен те тăрăшса ĕçлемесен татах хаçата çыратăп. Кĕтсех тăр, терĕ.

О—ç Хв.

## Кашни çынах ответлă

В. Филиппăв ӳкерчĕкĕ.



— Мĕнле, Иван Иванăвич, пит лайăхçке-ха: район пуçлăхĕсемпе республикăри пуçлăхсене те хамăрах суйласа лартатпăр.

— Лайăхне лайăх та...

— Мĕн тата?

— Сасартăк суйлани йăнăш пулсассăн... Ун пек чухне ĕлĕк делегатсене йатлатпăрчĕ, халĕ никама та йатлама çук.

---

### Ваçкасси йалпо отчотĕнче

— Мĕн пулчĕ сана, Шумилăв?

— Пыр йарăнса карĕ.

— Ма апла?

— Отчот хыççăн тухса калакансем правлени ерех ĕçни çинчен нумай калаçнăран. **В.**

### Ревкомиççи начар ĕçленĕ вырăнта

— Атте, мĕн вăл пирĕн кооперативра ревизи комиççи текенни?

— Хăй тĕнчере пурăнни çинчен растратă пулсан тин пĕлекен чĕрĕ чун.

### Маннă

Вăрнар районĕнчи шкул библиотекисенче 4158 кĕнеке çеç. Шăхалĕнчи тулли мар вăтам шкулта 25 кĕнеке кăна.

— Пирĕн шкул директăрĕ маннă кĕрпи çисе пурăнат̆ пулмала.

— Ма?

— Шкул библиотеки ваԓԓи кĕнекесем илме маннăран маннă кĕрпи çинĕ пулĕ ţетĕпçке-ха...



# Йĕплĕ çăмах

## Пăшăл-пăшăл сăмахсем

Ваштăр-ваштăр çил вĕрет, çатан витĕр мар-ши çав? Пăшăл-пăшăл сăмахсем сирĕн çирен мар-ши çав?

Сирĕн çинченех пулĕ, Тури Çĕрпÿкасси (Хĕрлĕ Чутай районĕ) комсомолĕсĕсем. Сирĕн политвĕренÿ те çук, пухусем туни те çук, член укçисем вăхăтра тÿлесе пырасси те çук, халăх хушшинче ĕçлесси те çук, хисеплĕ комсомол членĕн йатне йатса çÿресси çеç пур.

Пайан комитет çекретарĕн пичĕ хĕрелнĕ пек туйăнчĕ. Хĕрлĕ Чутай вăрманĕн паланлăхĕ витĕр тухнă чух, палан сапакки перĕннĕ пулĕ, çавăнпа хĕрлĕ пулнă пулĕ, йе ăна пĕтĕм халăх умĕнче намăс тивнĕ пулĕ.

## Тĕксĕм

„Капкăн" çынни Хĕрлĕ Чутай районĕнчи „Канаш" колхоз председателĕ пулса ĕçлекен Кондратйĕвпа тырпул пухса кĕртес ĕçе хатĕрленме кирлĕ çинчен калаçнă. Хăйпе калаçвă чухне Кондратйĕв сывлăш кăлармасăрах итлесе ларнă.

— Пит интересленнĕ-ши мĕн?

— Çук. Сывлама намăс пек туйăннă, хăйĕнчен ерех шăрши кĕресрен хăранă. Мĕншĕн тесен вăл пĕр май ÿсĕр, пама тивĕçлĕ мар колхозниксенех хăшне аванс тырă парса ĕçет,—теççĕ.

Кондратйĕв çутă сăнлă, теççĕ. Кĕленче çути çапнă та, çавăнпа çуттăн курăнать. Тĕрĕссипе илсен, хăй те, ăна ĕçмели тупса паракан ĕçĕсем те тĕксĕм.

## Алтуйипе Шенни

Ыйăнсан, вăйран кайсан, улăм пĕрчи те пĕрене пек курăннă, теççĕ. Çĕнйал Йавăшри Шенни йалкор ыйăнман, вăйран кайман, çапах ăна улăм пĕрчи пĕренен курăннă, „Çĕнйал" колхоз (Вăрнар районĕ) председателĕн—Пуххăвăн çитменлĕхĕсем Ельбрус тăвĕ пысăкĕш курăннă. Çавăнпа вăл Пуххăв çинчен суйа елек кÿрсе: „вăл иртнĕ кĕркунне патшалăха тырă сутнă колхозниксен укçипе жнейкă вырăнне, хăйне вальли велосипед илсе сутса ĕçнĕ", тесе çыртарнă („Капкăн" 3-мĕш номĕрĕнче). Халĕ Шенни „Капкăнăн" йĕплĕ çăмах вĕретекен хурана алли-урри мĕнĕпех кĕрсе ÿкрĕ. Çавăнпа епĕр авал чăвашсем: „ывăтма пĕлмен алтуйи хăйне пырса тивнĕ" тесе Шенни йалкорăн таса мар алтуйи пирки каланă пулĕ, тетпĕр.

## Силлесен

Улмуççийе силлесен, улми шултăрарах пулсан, патăртатса тăкăнать. Çĕнкасри (Çĕмĕрле районĕ) „Большевик" колхоз членне кĕнĕ Тапăртак Макçăмне „силлесен", улма вырăнне, тарĕ патăртатса тухĕ.

Силлеме кирлех ăна, мĕншĕн тесен вăл колхоза кĕрес умĕн лайăх лашине йута сутса, начар лаша илсе панă. Лаши пуш урапа кÿлсе çÿреме те йурăхсăр. Коньухсем калаççĕ: ку лашана питĕ асăрхаса пăхмала, пĕр ырă мар шухăшлă етем курсан, кăсйене чиксе кайма пултарать, теççĕ.

## Йухнă.

Чăвашсем иртсе кайакан çынсене хăйсем апат çинĕ чухне: „апата кил", тесе чĕнеççĕ.

Кивçурт Йенĕшри (Шăхасан районĕ) колхоз счетоводне—Илйин Алексейа çавăн пек апата ан чĕнĕр. Вăл „апата кил" тесен: „спасибă ырă апата" тесе калас çук, çÿрех ларса, пĕтĕм халăх тăранмалăх пĕçерне апата хăйех çисе йарĕ, мĕншĕн тесен вăл пит сăхă. Хăй ампарне хуртарнă 366 пăт колхоз тырринчен 30 пăтне вăрласа кÿпнĕ.

— Ара, Илйин, ку тырра мĕнле пĕтертĕн есĕ?—тесе ыйтсан:

— Урай хăми шăтăк пирки йухнă вĕт, мĕн тăвас?—тет.

Апла мар:

— Пыр шăтăкĕ пулнă пирки хырăма йухнă, мĕн тăвас?—тесе каламала пулнă.

## Кайу шăтасран.

Тăвай районĕнчи Ураскасси колхозне пырса кĕнĕ хыççăн, хамăрăн, лавçăран ыйтрăмăр:

— Лавçă йулташ! Ма есĕ суйăран? „Ĕçлĕх çулĕ" колхозăн сысна витти тавра сарлака та вăрăм йăвăççем кашласа лараççĕ, тесе каларăн. Сысна витине туса та пĕтермен иккен, тăррине те витмен, таврара есĕ каланă йăвăççем те çук,—тесе йатларăмăр.

Лавçă пирĕн умра тÿрре тухас тесе, пăт татса çапла каларĕ:

— Лăпланăр! Йăвăççене кăçал кĕркунне лартсан, витине туса пĕтеричченех вĕсенчен вăрман пулать,—терĕ.

Витине тума тытăнни виçĕ çул, хăшпĕр пĕренисене улахрах каççенче вутă тума та вăрлакаласа кайнă.

## „Пиднĕ-пидмен"

Ташла пĕлмен урине çатан çумне пуçтарас, пупле пĕлмен чĕлхине вĕри шÿрпе сыптарас, теççĕ.

Чăвашсен патшалăх хорĕн ийунĕн 6-мĕшĕнче

пулмали концерчĕ çинчен пĕлтерекен афишăна çыраканăн чĕлхине вĕри шўрпе сыптармала-ши, йе сахăрсăр чей сыптармала-ши?

Шупашкар хулин Крупскайа йачĕпе тăракан сачĕ умне çапнă афишă çине концерт программине çапла çырса пĕлтернĕ:

1. Чентрев те кĕпер. Ф. Павлова.
2. Пиднĕ те пидмен. Листкова.
3. Кĕреке пурри. В. Кривоносова, (тата ыт. те çав майлах çырнă).

Афишă çыраканăн чĕлхи мăкалнă („чĕнтĕрле“ вырăнне — „чентрев“, „пиçне-пиçмен“ вырăнне — „пиднĕ-пидмен“, „йурри“ вырăнне — „пурри“ текен пулнă). Мăка чĕлхене йакатма хăйра кирлĕ.

---

Р. В Фомичов ўкерчĕкĕ („Комсомольская Правда“ хаçатран).




**Фашиссен тăкакĕ.**

# ЖАЛĂБĂ КĔНЕКИ

Чехăв калавĕнчи „Жалăбă кĕнеки“ чукунçул станцин йатарласа тунă канторкинче выртнă.

Анат Туçа (Патăрйел р.) йалсовечĕн жалăбă кĕнеки йатарласа тунă канторкăра мар, ахаљ выртнăрантах выртаť. Чехăв жалăбă кĕнекин листисем пурĕш те пулнă, Анат Туçари кĕнекен икĕ страницă çеç тăрса йулнă.

Анчах Анат Туçари жалăбă кĕнекипе Чехăв калавĕнчи „Жалăбă кĕнеки“ хушшинче нимĕнле уйрăмлăх та çуккине есĕр Анат Туçари „Жалăбă кĕнекине“ вуласа тухсан хăвăрах курма пултаратăр. Унта акă мĕн-мĕн çырса хăварнă „Жалăбă кĕрекен“ етемсем:

„...Мне желательно было написать, но воздерживалась.

Поçпелăв милиционер çырса хăварнă кăна.

Тепĕр кунне Анат Туçари йалсоветăн хисеплĕ пуçлăхĕсем канцељарине персе çитнĕ те, пурте жалăбă кĕнеки çине тăраннă.

— Ах,—тенĕ çекретар Перепелкин.

— Ак сана!—тенĕ тепри.

— Çырас ответ,—тесе вывăд тунă пуçлăхсем. Вара часах сăрласа хунă:

„Ненмением в колхозе бумаги счетоводы колхоза как-то Евдокимов утащил одну чернильницу, а Горшков всю жалобную книгу.

за пред. Безубов,
секрт. Перепелкин“.

Колхоз счетовочĕсем жалăбă кĕнекине йатса тухса кайни çинчен çырнă унта. Мĕскĕн Перепелкин, хыпăнса ўкнĕскер, çĕнĕрен жалăбă кĕнеки тăвасси çинчен мансах кайнă мĕн. Анчах ĕç каплипех пĕтмест-ха. Икĕ страницăлă жалăбă кĕнеки тата та нуша курат-ха пуçлăхсем пирки. Йалсоветрисем ответ çырсанах икĕ колхозник колхоз правленине шарт сиккипе чупнă. Правленине вĕсем пушар тухнă чухнехи пек персе çитнĕ.

— Мĕн пулнă?

— Сан çинчен жалăбă çырнă!

— Ан калаç!..

Счетовод Йевдокимăв сиксе ўкнĕ те, çара пуçах йалсовета вĕçтернĕ. Йалсовета çитнĕ те вăл часах хирĕçле ответ çырса хунă:

„Чем доказываете, что мы утащили одну книгу... Это не правда“.

Йалсовет та парăнма шутламан. Йевдокимăв айне пулмаспăрах тесе шутланă вăл. Вара шартлаттарса хунă:

„Никаких доказательств не требуется. Факт установлен“.

Ĕçĕ кунта пĕрре те фактăсем çинче мар, икĕ страницăлă жалăбă кĕнеки çинче, тата Анат Туçари йалсоветĕнче ĕçлекенсен пайанхи самокритикăн çивĕч ыйтăвĕсене ăнланма миме çителĕксĕр пулнинче.

**Ген. Çергейĕв.**

---

# Ашак йăлилĕ Букрейĕв

Куйбышев облăçĕнчи Новодевичйĕ районĕнче те ытти районсенчи пекех, Райперекеткассипе унăн пуçлăхĕ пур. Унăн хушамачĕ—Букрейĕв. Пуçлăхпа пуçлăх пĕр пек мар, Букрейĕвăн та хăйне кура уйрăмлăх пур.—„Ашак чăкăмăçланса малала кайма чарăнсан, ăна пушăпа, йе туйапа хăвалама кирлĕ мар, ăна хўринчен йарса илсе мĕн пур вăйпа кайала туртас пулаť, вара вăл сиккипе чупма пултараť“—теççĕ ашаксен пурнăçне пĕлекенсем. Çавăн пекех пирĕн Букрейĕв та.—„Йур шурă“—тесен, вăл: „йур сара“ тесе тавлашаť.—„Пайан ытларикун“ тесен вăл: „пайан шăматкун“ тесе дискуççи тапратса йараť. Пĕр сăмахпа каласан, вăл хăйне çеç авторитет тесе шутлаť. Пĕрре манăн çак „авторитетпа“ чылайччен йумахламала пулчĕ.

— Мĕнле пыраççĕ-ха сирĕн районра зайом ĕçĕсем, перекеткассисене вклад пухас ĕçсем?—тетĕп епĕ сăмах тапратса.

— Ой, мĕн калаçас ку ĕçсем пирки! Ĕçсем отличнă пыраççĕ. Зайом сарас заданийе епир 100 процентран ытла тултарнă; укçине те çак куна 60—70 процент пуçтарнă; конверçи йĕркипе улăштарнă облигацисем пурĕ те тенĕ пекех перекеткассине кайала килеççĕ, вĕсене залога илетпĕр те укçа паратпăр; вкладчĕксен хисепĕ 5 уйăх хушшинче 11 пуç ўсрĕ, ĕçсем калама çук аван пыраççĕ,—тесе мухтанса илчĕ Букрейĕв.

— Ку цифăрсем сирĕн ĕçри çитĕнўсене кăтартмаççĕ, есир çителĕксĕр ĕçленине кăтартаççĕ,—тетĕп епĕ ăна хирĕç.

— Йепле ĕçлеме пĕлместпĕр? Епĕ зайом сарас тĕлĕшпе, çĕнĕ зайом тухнăранпа, темиçе çĕр циркуљар йанă йалсовечĕсемпе уполномочăннăйсене; вклад пухас тĕлĕшпе районри хаçат çине обйавлени çаптартăм; облигацисене пĕтĕмĕшпех залога хурса пĕтерсе кайала илме манасран, залога хывакансем çинчен списка туса ытти оргăнсене пĕлтерсе тăратăп; аслăрах работниксем хăйсен облигацийĕсене залога хывсан, вĕсем çинчен районри учреждениссене çырусем йарса намăслантаратăп; пĕр сăмахпа каласан, ытла та строга ĕçлетĕп. Тата мĕнле ĕçлемеле сан шутпа?—тесе çиленсе кайрĕ ман Букрейĕв.

Сирĕн капла ĕçленин усси çук, сийенĕ питех те пысăк пулма пултараť. Сирĕн ĕçре нимĕнрен ытла массăлăн ăнлачтару ĕçĕ хаклă; канцељарта ларас вырăнне йалсене, колхозсене, предприйатисене тухса массă хушшинче ĕçлемеле, тесе кĕскен ăнлантарса паратăп кăна.

Букрейĕв манпа нийепле килĕшесшĕн мар. Унăн вырăнсене тухса çўреме вăхăт çитмест иккен, аппаратне йертсе пынипе вăхăт иртсе кайаť иккен.

— Аппарата йертсе пырас тĕлĕшпе йепле ĕçлет сирĕн пуçлăх?—тесе ыйтса пăхрăм хăшпĕр сотрудниксенчен.

— Приказпа йертсе пыраť, приказпа тарăхтараť. Кăçал пилĕк уйăх хушшинче 138 приказ кăларчĕ, кашни приказне производствăлă канашлусенче „прорабатываť“ тума хушаť, çапла тарăхтарса пĕтерет, çавăнпа та епир вырăнсене тухса çўреме вăхăт тупаймастпăр,—терĕ пĕр сотрудникĕ

Мĕнле пит кирлĕ приказсем ҫыраҫ-ха ку? — тесе, приказ кĕнекине тĕллĕн-тĕллĕн вуласа пăхма шутларăм.

Акă унăн приказĕсен тĕслĕхĕсем:

Ултăмĕш номĕрлĕ приказпа Букрейĕв Лошчинин бухгалтĕра перекеткассине килекен хаҫатсене вăхăтĕнче ҫĕлесе пыма хушаҫ; хăшпĕр номĕрĕ ҫухалсан ун ҫинчен ҫавăнтах Букрейĕва раппăртпа пĕлтерме хушаҫ. Ку ĕҫре Лошчинина пулăшса пыма ăна замеҫтитĕл параҫ - Уварăв контроҔора.

Сакăрăмĕш номĕрлĕ приказăн 3-мĕш пункчĕпе облаҫри перекеткассисен управленийĕн пĕр директивне кăмăлласа йышăнаҫ.

Вунвиҫҫĕмĕш номĕрлĕ приказпа Уварăв контроҔора пулас тираж ҫинчен пĕлтерекен обйавленипе плакатсене перекеткассин ҫтенисем ҫумне ҫыпăҫтарса хума хушаҫ.

Тепĕр приказĕпе Уварăва обйавленисене чиперрех ҫыпăҫтараманшăн выгăвăр параҫ.

Вăтăрĕмĕш номĕрлĕ приказпа каҫҫир Иванов командировкăра пулса ҫителĕклĕ ĕҫлени ҫинчен пĕтĕм сотрудникĕсене пĕлтерет.

Ытти епĕ пăхса тухнă приказсем те ҫаксенчен нумайах уйрăм мар. Ҫакăн пек приказсене „прорабатываҫ" туса тарласа лараҫҫĕ иккен перекеткассинчи сотрудниксем.

Ку ĕҫ мĕнле йурăхсăрри ҫинчен те ăнлантартăм Буркрейĕва, анчах вăл манпа нийепле те килĕшесшĕн пулмарĕ.

Чăнах та ашака хӳререн тытса кайала сĕтĕрнĕ пекех, Букрейĕва перекеткассинчен сĕтĕрсе кăлармa тивет иккен,—тесе шухăшларăм унпа уйăрăлса тухса кайнă чух.

**Сенĕк.**

# КуҔтурлă суту-илӳве ăнланман прикашчик

Филиппăв ӳкерчĕкĕ.




ПРИКАШЧИК: — Хăйсем суту-илӳ куҔтурлă тума вĕренме хушаҫҫĕ, хăш учебник тăрăх, хăш кĕнеке тăрăх вĕренмелине каламаҫҫĕ.

ТАВАР ИЛЕКЕН:—Пуринчен ытла жалăбă кĕнеки тăрăх вĕренсен аван пулĕ...

# Тилĕпе виноград



**И. А. Крылов**

Выçварлă тилĕ тус кĕрет сата;
Курать вăл, виноград пиçет унта.
Хай, тилĕн куçĕсем шарсах пăхаççĕ;
Сĕтеклĕ сапаксем ахах пек йăлкăшаççĕ;
Анчах çӳлте вĕсем—çав пĕтерет:
Ăçтан, мĕнле пырса вăл тĕкĕнмест,
Куçа кĕрет,
Шăл çеç витмест.
Пустуй ĕçпе сехет асаплансан,
Кайать калла: „Мĕнех вара!—тет
хай кичемлĕн,
Пăхма вăл пит аван,
Илемлĕ,
Сип симĕс—пĕр çырли пиçмен:
Часах шăла çӳçентерен".

*Н. Пиктемир куçарнă.*

## Хамăн чĕлхем—хамăн тăшман

Çак, есĕр хаљ вулакан халапа, шухăшласа кăларнă йат Кувакинă районĕнчи „Красный передовик" колхоз председателĕ Иуматăва тивмест. Ăна çав халапа çине тăрсах пурнăçа кĕртесси çеç тивет.

Иуматăв Коçтӳнин Александр йатлă колхозникe автомашин ваљљи запаслă пайсем илме Шупашкара йанă, анчах укçа паман, куçарса йама пулнă.

Коçтӳнин кирлĕ пайсене суйласа хунă та, Йуматăв укçа йарса парасса кĕтме тытăннă. Кĕтнĕ-кĕтнĕ, кĕтсе илеймен. Телефонпа шăнкăртаттарса ыйтса пĕлме шухăш тытнă.

— Ну, мĕнле, Иуматăв й., укçа куçарса патăн-и?

— Çук! Машин йатăмăр. Сана укçа машинпа илсе пырĕç.

Коçтӳнин машин пырасса кĕтнĕ-кĕтнĕ, анчах кĕтсе илеймен. Телефонпа шăнкăртаттарнă.

— Ну, укçа-тенкĕ пирки ĕçсем мĕнле?

— Машин кайрĕ, укçа йанă! — ответленĕ Йуматăв йулташ.

Машин çапах çук. Коçтӳнин татах шăнкăртаттарнă.

— Укçа-тенкĕ мĕнле? Машин çук...

— Пулмасть те! — татăклăн таврса хунă Йуматăв. — Укçа-тенкĕмĕр çук, машин та йамарăмăр.

Сылтăм алă мĕн тунине сулахайĕи пĕлмесен — ку вара начар йапала, теççĕ. Анчах чĕлхе мĕн çинчен лĕпĕртетнине пуç мими те пĕлмесен — тата начартарах йапала пулать.

## Пĕр йăвара тăватă „йăва"

Кун пекех пулнă-ши, пулман-ши? Çук, ун пекех пулман. Анчах... кам пĕлĕ—пулнă та-и тен, мĕншĕн тесен Мăкăр йалĕнче (Канаш р.) пĕр çуртрах тăватă учреждени: колхоз правлени, йалсовет, почтă агĕнстви тата вулав çурчĕ. Çурчĕ кивĕ, ишĕлсе анма пуçланă, пĕчĕк. Пĕр учреждениe калаçни ытти учрежденисенчи калаçусемпе хутшăнса кайать.

Кăштах сухал тухнă, тăваткал питлĕ, сарă çӳçлĕ колхозник вулав çурт пуçлăхĕнчен ыйтать:

— Шолăхăв çырнă „Уçнă çерем" йатлă кĕнеке пур-и?

— Çук вăл! Апат çиме килне кайрĕ,—тесе справкă парать тепĕр кĕтесре ĕçпе пынă тепĕр колхозникe счетовод.—Йегорăв мĕн тума кирлĕ пулчĕ сана?

— Канверт çыпăçтарма! А-а, кунтах-çке çилĕмĕ. Илме йурать-и?—калаçса тăрать тепĕр кĕтесре тепĕр колхозник почтă агĕнчĕпе.—Канаша почтă хăçан кайать?

— Тепĕр çултан! — илтĕнет тепĕр кĕтесре калаçни.—Кăçал пулса пĕтес çук. Йăвăçне çурри турттарса килнĕ. Хĕвелĕ ытла пĕçертсе пăхнипе йурĕ ирĕлсе пĕтрĕ те, ытти йулнă йăвăçсене турттарса кăларасси те пĕтрĕ. Тахçан кĕтнĕ клуба хăçан та пулсан туса пĕтерĕпĕр-пĕтерĕпĕрех. Хăма кирлĕ...

— Протокол çырма-и? Миçе листа кирлĕ?

— Пин!—илтĕнет йалсовет йышăннă икĕ сĕтел йенчен.—Вăл укçана тупса парас пулать. Ак кĕçĕрех совешчани туса иртерĕпĕр.

— Лашасемпе-и? Ма вĕсем çуран кайман,—илтĕнет колхоз правлени йышăннă кĕтесрен.—Çураки хыççăн лашасене кăштах канма памала. Коњухсем!..

— Аван шăтнă. Планпа кăтартнă тырра туса илетпĕрех кăçал. Çăмăрĕ пулсан...

— Урайне варлатăр тесе, шкула кĕртмеççĕ. Кинон ăçта кайса кĕрес?

— Вăрмана... Хурăн кăларса килтĕмĕр. Микулай калать: хурăнсем йурăхлă мар, лапшак çулçăлă, сулхăн йăвăçсем лартмала, тет.

— Бригадир çине-и? Çук. Ĕçĕ унăн ахаљ те нумай. Йăвана хушас. Унăн „нагрузкă" сахал,—калаçаççĕ комсомол комитечĕн çекретарĕпе тепĕр çамрăк активис-комсомолĕс.—Ăна хушмасан кама хушас?

— Гоголљ писателе. „Мертвые души" вуласа тухас, тетĕп. Гоголљ писатĕл кĕнеки çук пулсан...

— Иĕп пар! Районран ĕнер йанă циркуљар хутне „дела" çумне çĕлесе йĕркелес.

— Тăватă пăт туртаканнине-и? Чирлеттерес мар. Лайăх пăхсан сысна вилмест. Чирлесенех выљăх тухтăрĕ патне кайса кăтартас, йе...

— Преми парас. Ун пек пĕтĕм вăйран тăрăшса ĕçлекен колхозник Мăкăр йалĕнче сайра-ха. Заçеданире пăхса тухăпăр та...

— Шкапа хурӑпӑр... Кунта хӑварсан ҫаклатса кайма пултарҫҫӗ. Ун пек кӗнеке урӑх пирӗн библиотекӑра ҫук. Ахаљ те пирӗн кӗнекесем лайӑххисем... ҫӗннисем сахал. Шупашкара кӗнекесем туйанма ҫын йарса пӑхсан аванччӗ те.

— Посылкӑпа-и? Хаклӑ мар. Малтан посылкине тараса ҫине хурса турттарса пӑхар. Йавӑр турт-масӑ-ҫке, ҫӑмӑл-ҫке! Продавецсен курсне вӗренме кайнӑ ачу патне кӗпе-йӗм тавраш йаратӑн пулӗ-ха...

— Мар! Кирпӗч! Пулас клуб кӑмакине тума кирпӗч халех кӳрсе хурсан аван пулаӑ. Халӗ кирпӗч савӑчӗсем ӗҫленӗ вӑхӑтра кирпӗч тупма лайӑх. Хӗллене кӗтсе ларсан—тупаймӑпӑр. Санӑн шухӑшупа мӗнле.

— „Капкӑн" журнал хаклӑ мар. 6 уйӑхшӑн 2 тенкӗ те 40 пус. Укҫа тӳле те... Алла квитанци парӑп . . . . . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Малала мӗн-мӗн илтнине ҫырмарӑм, мӗншӗн тесен сӑмсана тусан кӗнипе сунас аптӑратма тытӑнчӗ. Сунас килсен пӗтӗм сывлӑша кисрентерсе ачхулатнӑ чухне кивӗ ҫурт ишӗлсе анасран хӑраса тула, усӑ сывлӑша тухрӑм.

**Иван Мучи.**

## Кам мӗн ҫинчен ҫырма хушмасӑ

●● Нӗркечри Шмидт йачӗпе тӑракан колхоз (Патӗрйел р.) председателӗ пӗр гектар ҫӗр ҫине карта тытмасӑрах улмуҫҫисем лартса тунӑ сат ҫинчен ҫырма хушмасӑ. Вӑл сат ҫинчен ҫырма кирлӗ мар, мӗншӗн тесен вӑл сатри 100 тӗп улмуҫҫине пӗлтӗрех качакасем ҫисе йанӑ, пӗтме пуҫланӑ сат ҫинчен ҫырни усӑ кӳрес ҫук,—тет мӑйне тӑсса.

●● Тӳлкой йалсовет председателӗ (Вӑрмар р.) пушар насусӗ ванчӑк, урапин ни турти, ни урхалӑхӗ ни тевӗшӗ ҫукки ҫинчен ҫырма хушмасӑ. Ҫырсан, ҫырмасан та пирӗн йалсоветра кӑҫал пушар тухас ҫук, мӗншӗн тесен пушарпа кӗрешесси пирӗн йалсоветӑн кӑҫалхи ӗҫпланне кӗмен,—тет.

●● Анат Ачакри (Йетӗрне районӗ) вулав ҫурт пуҫлӑхӗ Йухтанӑв хӑй вулав ҫуртне уйӑхра 3—4 хут кӑна пырса курни ҫинчен ҫырма хушмасӑ. Ҫырсан-ҫырмасан та мана йалсовет ӗҫукҫи вӑхӑтра тӳлесе пырӗ, мӗншӗн тесен, епӗ йалсовет председателӗн шӑллӗ пулатӑп,—тет.

●● Пухтел районӗнчи (Куйбышӗв облаҫӗ) Ҫӗнӗ Улхашри пиҫмоносцӑсем Клементйӗвпа Бељаков подписчиксен хаҫачӗсене—пасарта, „Капкӑна"—йала килсен суткалани ҫинчен ҫырма каламаҫҫӗ: пирӗн пек йапӑх ӗҫлекен ытти районсенчи пиҫмоносцӑсем ҫинчен ҫырӑр,—теҫҫӗ.

# МӐШКӐЛАКАН

П. Филиппӑв ӳкерчӗкӗ.

Куславкка районӗнчи Аслӑ Сала йалсовечӗпе Тӗрлемес колхозӗ тата Вӑрнар районӗнчи Санарпуҫ йалсовечӗ тырпул пухса кӗртме халӗ те хатӗр мар.



— Кӑҫал тырӑ час пулса ҫитес ҫук.
— Ӑстан паллӑ?
— Есӗр, йалсоветра ӗҫлекенсем, тырпул пухса кӗртме халӗ те хатӗр мартан.

*Н. В. Гогољ*

# ЧИЧИКӐВ НОЗДРЁВ ПАТӖНЧЕ

*„Мертвые души“ поемӑ сыпӑкӗ* *)

Апатне те пасӑрах ҫисе пӗтернӗ, ерехӗсене те тутанса пӑхнӑ, хӑнисем хаљ те сӗтел хушшинчех ларассӗ. Чи кирлӗ ӗҫ ҫинчен Чичикӑвӑн нимпе те Ноздрӗвпа кӗрӳшӗ умӗнче сӑмах хускатас килмен: кӗрӳшне темле айакра тӑракан йут ҫын темеле, анчах ӗҫӗ улах ҫӗрте туслӑн калаҫма хушнӑ. Кӗрӳшӗ хӑрамала ҫын пулма та пултарайман-и тен, мӗншӗн тесен, ҫителӗклех ӗҫсе супнӑ пулас та, пукан ҫинче ларнӑ ҫӗртех, тӑтӑшах сӑмсипе сӗнксе илнӗ. Акӑ вӑл шанчӑкран тухнине хӑйех туйса илчӗ те, киле йама ыйта пуҫларӗ, ыйтассине вара, вырӑссем калашлӗ, хӑмӑта лаша мӑйӗ ҫине хӗскӗчпе туртса тӑхӑнтарнӑ пекех, ҫав тери кахалӑн та сӳрӗккӗн ыйтрӗ.

„Ҫук! Ҫук! йамастӑп“ терӗ Ноздрӗв.

„Тӑхта-ха, ан кӳрентер мана, тусӑм, чӑнах кайатӑп“ терӗ кӗрӳшӗ: „ес мана апла ытла та кӳрентеретӗн“.

„Ним те мар, ним те мар! епӗр халех акӑ банкӑ пекки лартса выљӑпӑр“.

„Ҫук, хӑвах выља, тӑванӑм, еп пултараймастӑп, чӑн та арӑм хытӑ кӳренӗ, ман ӑна йармӑркӑ ҫинчен каласа кӑтартмала. Чӑнах, тӑванӑм, унӑн кӑмӑлне уҫас пулать ӗнтӗ. Ҫук, чарса тӑминччӗ ес мана!“

„Ну, арӑмупа тата, кайтӑр вӑл... патне! пит кирлӗ ӗҫ тӑватӑр пуљ ӗнтӗ иксӗр“.

„Ҫук, тӑванӑм! вӑл ман ҫав тери кӑмӑллӑ арӑм, хисеплӗ те тӳрӗ ҫын. Чӑн та примерлӑ, пит те ыслӑ тата шанчӑклӑ. Пулӑшать тата мӗнле... ӗненетӗн-и? ман куҫҫулсем тухрӗҫ. Ҫук, ес мана чарсах ан тӑр ӗнтӗ; тӳрӗ ҫын пек кайам. Ҫакна епӗ сана пӗтӗм кӑмӑлтан ӗнентерсе калатӑп“.

„Кайтӑрах еппин: мӗн усси пултӑр ун ҫумӗнче!“ терӗ Чичикӑв Ноздрӗва хуллен.

„Чӑнах та-ҫке!“ терӗ Ноздрӗв: „ҫавӑн пек ҫемҫешкесене тем пек йуратмастӑп! мӗн тӑвас санпа, кайах еппин арӑмупа ачашланма, феҫук!“ тесе хушрӗ илтӗнмеле.

— Ҫук, тӑванӑм, ес мана феҫук **) тесе ан вӑрҫ-ха“ терӗ кӗрӳшӗ: „пурнӑҫ та манӑн арӑм пирки тытӑнса тӑрать. Вӑл, чӑнах, калама ҫук ырӑскер, йуратмаласкер, ҫав тери ачашлаканскер... куҫҫулпе йӗрес килсе кайать, йармӑркӑра мӗнмӗн курни ҫинчен ыйтсан, йӑлтах каласа памала... чӑн та пит йуратмала ҫын вара“.

„Ну, кай еппин, суйса кӑтарт ӑна пули-пулми ҫинчен! Акӑ санӑн картусу“.

„Ҫук, тӑванӑм, сан ун ҫинчен кӑшт та апла каламала мар: ес ун пек мана та кӳрентеретӗн, темеле, вӑл ҫав тери йуратмаласкер.“

„Еппин хӑвӑртрах тухса сӗтӗрӗн ун патне!“

„Ҫапла, тӑванӑм, кайатӑп; йулма пултарайманшӑн каҫар. Чунтанах йулӑттӑмчӗ, анчах пултараймастӑп“. Кӗрӳшӗ хӑй тахҫанах бричкӑ ҫинче ларнине те, тахҫанах хапхаран тухса кайнине те асӑрхайман, ҫул тӑрӑшшӗпех каҫарусем ыйтса пынӑ, ун умӗнче тахҫанах пушӑ уйсем пуҫланнӑ. Арӑмӗ те вӑл йармӑркӑ ҫинчен каланине нумайах итлеймен пулӗ.

„Ҫав тери ирсӗр!“ терӗ Ноздрӗв кайакан екипаж ҫине чӳрече умӗнчен пӑхса тӑрса. „Ав йепле тухса сӗтӗрӗнчӗ! Пичеври лаши йапӑхах мар вара, епӗ ӑна тахҫанах ҫаклатасшӑнччӗ. Анчах унпа хӑйпе ниҫтан та пӗтӗҫме май ҫук. Феҫук тӑк, феҫуках ӗнтӗ!“

Ҫакӑн хыҫҫӑн вӗсем пӳлӗме кӗчӗҫ. Порфири ҫурта пырса пачӗ. Ҫав самантра Чичикӑв хуҫа аллинче таҫтан тупӑннӑ карт кулати пуррине асӑрхаса илчӗ.

„Мӗнле-ха, тӑванӑм, выљӑпӑри?“ терӗ Ноздрӗв карт кулати хӗррисене пӳрнисемпе хӗстерсе тата кӑштах авса. Хучӗ шӑтӑртатса илчӗ: „вӑхӑта иртермелӗх, банкӑна виҫҫӗр тенкӗ лартатӑп.“

Анчах Чичикӑв сӑмах мӗн ҫинчен пынине илтмӗш пулчӗ те сасартӑк темскер аса илнӗ пек туса: „А! манса кайас марччӗ-ха, ман сан пата ыйту пур“ терӗ.

„Мӗнли?“

„Ӗҫне тӑватӑп тесе сӑмах пар малтан.“

„Мӗнле ыйту вара?“

„Ара, сӑмах пар ӗнтӗ?“

„Парам“.

„Чӑн сӑмах-и?“

„Чӑн сӑмах.“

„Акӑ мӗнле ыйту: санӑн ревизирен кӑларман вилнӗ хресченсем пайтах пулӗ?“.

„Пур, вара мӗн?“

„Ҫавсене куҫар-ха ман ҫине, ман йат ҫине кӳрт“.

„Мӗне кирлӗ сана вӗсем?“

„Кирлӗ ҫав.“

„Мӗн тума?“

„Кирлӗ ара ӗнтӗ, кирлӗ... мӗн тума кирли вӑл ман ӗҫ, пӗр сӑмахпа каласан кирлӗ“.

„Мӗн те пулин тума шутланӑ ес ӗнтӗ“. Кала тӳррипе, мӗн тума кирлӗ?“

„Мӗн шутланӑ вара? Ун пек пусҭакран нимӗн тума та пулас ҫук“.

„Мӗне кирлӗ вара вӗсем сана?“

„Вӑт йепле тӗпчесе пӗлме йуратаканскер!. Вӑл пур ирсӗре те аллипе хыпашласа пӑхасшӑн, ҫийӗнчен тата шӑршласшӑн та.“

„Мӗншӗн каласшӑн мар вара есӗ?“

„Мӗн услам пултӑр сана ӑна пӗлнипе? Ахаљренех, шухӑш килсе кӗчӗ те.„

„Асту, каламасӑр тумастӑп.“

„Пӑх та кур ӗнтӗ ӑна, тӑватӑп тесе сӑмах пачӗ те, хаљ тата кайала чакать: ку вара санӑн тӳрӗлӗхсӗрна кӑтартать“.

„Ес хӳт те мӗн пупле те, анчах мӗне кирлине каламасӑр тумастӑп.“

„Мӗн тупса калам-ши ӑна“ тесе шухӑшларӗ Чичикӑв. Кӑштах шухӑшласа тӑнӑ хыҫҫӑн вара вилӗ чунсем ӑна общчӗствӑра хӑйӗн йатне ҫӗклеме кирли ҫинчен пӗлтерчӗ: пысӑк именисем ҫук унӑн, унченлӗхе хӑть, мӗнле те пулин чун пеккисем пулсан та йуранӑ пулӗччӗ.

---

**) „Мертвые души“ поемӑ пӗремӗш хут тухнӑранпа кӑҫал ийуњ уйӑхӗнче 95 ҫул тултарчӗ.

*) Феҫук—ӑрҫыншӑн кӳренмели сӑмах.

„Суйатăн, суйатăн!“ терĕ Ноздрĕв, лешне каласа пĕтерме памасăрах: „суйатăн, тăванăм!“

Маттур шухăшласа кăларайманнине тата сăлтавĕ те чылайах хăватсăррине Чичикăв хăй те туйса илчĕ.

„Апла пулсан тўррипех каласа парам еп сана“ терĕ вăл хăйне тўрлеткелесе: „анчах тархасшăн никама та ан пĕлтер ун çинчен. Епĕ авланма шут тытрăм, пĕлесчĕ санăн, хĕрĕн ашшĕ-амăшĕсем пит хисеплĕ çыншăн çунаççĕ. Çав тери комиссçи пулса тăчĕ! Çыхланнипе те тарăхатăп: каччин тем тусан та 300 чунтан кайа пулмала мар теççĕ, апла пулсан, манăн лăп та шăп 150 хресчене йахăн çитмест, çавăнпа та...“

„Ну, суйатăн, суйатăн!“ тесе кăшкăрчĕ Ноздрĕв каллех.

„Ну, халĕ ĕнтĕ, ак çакăн чухлĕ те суймарăм“ терĕ те Чичикăв, çавăнтах хăйĕн качапўрнин чи пĕчĕк пайне пуçпўрнипе виçсе кăтартрĕ.

„Пуçа хуратăп, суйатăн!“

„Анчах та ку пит кўренмеле. Мĕншĕн ман сана çине тăрсах улталас?“

„Ну, пĕлетĕп-çке сана: йулташла калам-ха,-пысăк мошеник вĕт ес! Хăвăн пуçлăху пулсассăн, епĕ сана чи малтан тĕл пулнă йăвăçранах туртса çакнă пулăттăм“.

Чичикăв апла каланăшăн кўренчĕ. Çавăн пек хисеплеме пĕлмесĕр тўрĕн перĕнтернисем пăртак та килĕшмен ăна. Хăйпе çакнашкал пĕр килти çын пек пулса калаçнине тўсме пултарайман вăл, çынни пит пысăк пулсан хăт апла-капла. Çавăнпа вăл пачах кўренсе çитрĕ.

„Тупата çакнă пулăттăм“ терĕ тепĕр хут Ноздрĕв: „епĕ сана пытармасăрах калатăп ăна, хăвна кўрентерес тесе мар, ахаљ çеç, йулташла калатăп“.

„Пурин те хăйĕн виçи пур“ терĕ Чичикăв хăйне хисепе хурса: „питех ун пек сăмахсемпе вĕçкĕнленес килет пулсан, казармăсене кай.— Парнелес теместĕн пулсан, сут еппин“ тесе хуша хучĕ унтан.

„Сутма тата! Епĕ сана пĕлетĕп, ултавçă вĕт есĕ, пурĕпĕр хаклă памастăн?“

„Е! хăв та лайăх çав! Асту-ха ĕнтĕ, мĕскер, вĕсем сан мерчен мар пул вĕт?“

„Шутлани тĕрĕсех пулчĕ, еп сана пĕлсе çитнĕ.“

„Каçар-ха, тăванăм, мĕнле санăн шухăшусем çав тери сĕмсĕр. Вĕсене сан ахалех памала мана“.

„Итле еппин: хам темĕнле хыт-кукар маррине кăтартас тесе епĕ санран нимĕн те илмĕп. Туйан ман ăйăра, лешсене еп сана çине хушса парăп“.

„Каçар тархасшăн, мĕне кирлĕ мана ăйăр?“ терĕ Чичикăв çавнашкал сĕнўрен чăннипех тĕлĕнсе.

„Йепле мĕне кирлĕ? Уншăн еп 10 пин тенкĕ тўленĕ те, сана тăватă пинпех паратăп.“

„Чăнах та мĕне кирлĕ мана ăйăр? савăт тытмастăп епĕ.“

„Чим, итле-ха, ес ăнланаймарăн: санран хаљ еп 3 пин тенкине çеç илетĕп, тепĕр пинне кайран тўлеме пултаратăн есĕ.“

„Каланă сана ăйăр кирлĕ мар тесе“.

„Еппин, тур кĕсрене туйан.“

„Кĕсре те кирлĕ мар мана.“

„Кĕсрешĕн тата ху курнă кăвак лашашăн епĕ санран икĕ пин кăна ыйтатăп.“

„Лашасем кирлĕ мар мана.“

„Сутатăн ес вĕсене: вĕсемшĕн сана пирвайхи йармăркăрах виçĕ хут ытларах парĕç.“

„Еппин ес хăвах сут вĕсене, питех виçĕ хут ытларах илессе шанатăн пулсан“.

„Епĕ ăна пĕлсех тăратăп, анчах сана та усă кăтартас килет манăн“.

Чичикăв ăна ырă суннăшăн тав турĕ те, кăвак лашине те, тур кĕсрине те, туйанма килĕшмерĕ.

„Апла пулсан, йытăсене ил. Епĕ сана пĕр мăшăр сутăп,—ўт тăрăх вирт кайĕ кăна! Шултра йышши, вичкĕнскерсем, уссилĕ; çăмĕ шăрт пек виреле тăрать; айак пĕрчисем пичке пек тивĕççĕр хăпарса тăнине ăспа та тавçăрса илеймĕн; ури лаппи чăмăр, çĕре перĕнтермĕ.“

„Мĕн тăвас ман йытăсемпе? Сунарçă мар еп“.

„Санăн та йытăсем пулччăр тетĕп еп. Итле-ха, йытăсем те кирлĕ мар пулсан, ман шарманкăна туйан. Тĕлĕнмеле шарманкă! Тўрĕ çын пек калатăп, хама та пин çурра ларчĕ, сана 900 тенкех паратăп.“

„Мĕне кирлĕ-ха мана шарманкă? Унпа çулсем тăрăх сĕтĕрĕнсе, укçа ыйтса çўреме нимĕç çынни мар вĕт еп.“

„Ку нимĕçсем илсе çўрекен шарманкă мар. Ку орган: йурийех кĕрсе кур-ха: пĕтĕмпех хĕрлĕ йăвăçран тунăскер. Кăтартăп-ха ăна епĕ сана!“ Ноздрĕв çавăнтах Чичикăва аллинчен йарса илчĕ те, тепĕр пўлĕмеле сĕтĕрме тытăнчĕ. Анчах лешĕн темле туртăнсан та, тата шарманки мĕнлине пĕлни çинчен каласа йăлăнсан та, Маљбург похода мĕнле кайни çинчен тепĕр хут итлемеле пулчĕ.

„Укçала илме кăмăлу çук пулсан, акă мĕн, тăванăм, итле: епĕ сана шарманкăна тата хамăн мĕн пур вилĕ чунсене парам, есĕ хăвăн бричкуна пар, тата 300 тенкĕ çине хуш“.

„Ак тамаша, вара хамăн мĕнпе кайас?“

„Епĕ сана тепĕр бричкă парăп. Аслăк айне кайар, еп ăна сана унта кăтартăп. Ес ăна сăрлаттар та? тĕлĕнмеле чаплă бричкă пулса тăрĕ“.

„Ав ăна чарăнма пĕлмен усал йепле ĕшкĕртме пуçларĕ“, тесе шухăшларĕ Чичикăв хăй ăшĕнче, вара тĕрлĕ бричкăсенчен, шарманкăсенчен тата айак пĕрчисем пичке пек тивĕççĕр хăпарса тăнине ăспа та тавçăрма çук чăмăр ура лаппилĕ йытăсенчен темле пулсан та хăпма шут тытрĕ.

„Вĕт бричкă та, шарманкă та, вилĕ чунсем те— пурте пĕрле!“

„Кирлĕ мар!“ терĕ тепĕр хут Чичикăв.

„Мĕншĕн кирлĕ мар вара?“

„Мĕншĕн тесен, кирлĕ мар вĕсем мана, ççĕ те пĕтрĕ“.

„Еккей, чăнахах ес çавăн пек-и! Пăхатăп та, санпа лайăх туссемпе йулташсем хушшинчи пек пулма хĕн иккен... чăнах та икĕ питлĕ çын пулни халех курăнать“.

„Мĕн вара, ухмах-и епĕ? Хăвах шутласа пăх-ха: хама кирлĕ мар йапаласене мĕншĕн туйанас-ха манăн?“.

„Ну, ан калаç ĕнтĕ тархасшăн. Халĕ ĕнтĕ еп сана пит те лайăх пĕлетĕп. Çав тери тĕкĕнмеле мар çын есĕ, тупата! Чим, итле-ха: банкăла выљар-и? Пур вилесене те тата шарманкине те лартăп“.

„Банкăла выљас тени тĕлли-палливе çухатнипе пĕрех вăл“ терĕ Чичикăв, çав хушăрах лешĕн аллинчи карт çине хăйаккăн пăхса илчĕ. Карт хĕррисем те, тўнтер йенĕсем те шанчăклă мар пек туйăнчĕç ăна.

„Мĕншĕн тĕлли-паллине çухатни?—терĕ Ноздрĕв. „Нимĕнле тĕлли-паллине çухатни те пул-

ма пултараймасӗ. Телейӳ кӑна сан йенче пултӑр, вара ес манран шуйттан йӑтайми выҫаса илме пултаратӑн. Акӑ вӑл! Йепле телей!" терӗ вӑл лешӗн выҫас кӑмӑлне ҫӗклентерес тесе. „Йепле телей! Йепле телей! Ҫапат те ҫапат вӗт! Ав леш, ылханлӑ тӑххӑрли, епӗ йӑлтах унпа выҫаса йӑтӑм. Сутассине те туйсах тӑнӑччӗ, ҫапах, кусӑма хӗсрӗм те, сутах шуйттан илесшӗ, тесе шухӑшларӑм ӑшра".

Ноздрӗв ҫапла каланӑ вӑхӑтра, Порфири бутылкӑ илсе кӗчӗ. Анчах Чичикӑв выҫама-та, ӗҫме те татӑклӑнах килӗшмерӗ.

„Мӗншӗн выҫасшӑн мар ес?" терӗ Ноздрӗв.

„Выҫас килмест. Чӑннипех каласан, манӑн картла выҫама чун туртмасӗ."

„Мӗншӗн туртмасӗ?"

Чичикӑв хулпуҫҫийӗсене хӗссе илчӗ те: „мӗншӗн тесен выҫас килмест" тесе хушрӗ.

„Начар ҫке есӗ!"

„Мӗн тӑвас ӗнтӗ? Турӑ ҫапла тунӑ."

„Фетук ҫав! Малтан епӗ сан мӗн чухлӗ те пулин йӗркелӗ ҫын пулӗ тесе шутланӑччӗ, есӗ хӑвна хисепленине те туймастӑн. Санпа нийепле те ҫывӑх ҫынпа калаҫнӑ пек калаҫма ҫук...-Нимӗнле йӑваш чунлӑх та, нимӗнле чӗрӗлӗх те тупаймӑн. Йӑлтах Собакевич ӗнтӗ, ҫавӑн пекех ирсӗр!"

„Мӗскершӗн-ха мана йатлатӑн есӗ? Епӗ айаплӑ-и ӗнтӗ картла выҫаманшӑн? Пит хӗрхенетӗн пулсан вилӗ чунсене ҫеҫ сут мана есӗ".

„Кукша шуйттан илӗн! Нимӗнсӗрех парасшӑнчӗ, халӗ илейместӗн ӗнтӗ! Виҫӗ патшалӑх парсан та, памастӑп! Ҫав тери сӗмсӗр ҫын, ирсӗр кӑмакаҫӑ! Ҫакӑнтан пултӑр санпа ӗҫ тӑвасси! Порфири, коҫуха кайса кала-ха, ун лашисене сӗлӗ ан патӑр, ан тив, утӑ кӑна ҫиччӗр вӗсем".

Чичикӑв ҫакна нийепле те кӗтменччӗ.

„Санӑн пӗреххут ман куҫ умне курӑнма та кирлӗ пулман!" терӗ Ноздрӗв.

Ҫакнашкал хирӗҫсе кайнӑ пулин те, хӑнипе хуҫи каҫхи апата та пӗрлех ҫинӗ, анчах ун чухне сӗтел ҫинче тӗлӗнмеле йатлӑ ерехсем нимӗнли те пулман. Темӗнле кипрски текен йӳҫӗхсе кайнӑ ерехпе тултарнӑ кӗленче кӑна тӑнӑ. Каҫхи апат хыҫҫӑн, Ноздрӗв Чичикӑва хӑрах йенчи пӳлӗмне ӑсатрӗ. Ава выҫҫи унта вырӑн хатӗрленӗ пулнӑ: „Акӑ сана выҫҫи вырӑн. Ырӑ каҫ та сунас килмест ман сана!" терӗ вӑл.

Ноздрӗв тухса кайсан, Чичикӑв пит кӑмӑлсӑрланса йулчӗ. Ашӗнче вӑл хӑй ҫине тарӑхрӗ, хӑйне ун патне кӗрсе вӑхӑта ахаҫ ирттернӗшӗн, анчах унтан та ытларах—хӑйне унпа ӗҫ ҫинчен сӑмах хускатнӑшӑн, — ача пек, ухмах пек асӑрханаймарӑм тесе вӑрҫса илчӗ, мӗншӗн тесен, Ноздрӗв ҫынни шанмала мар... Ноздрӗв—усал ҫын, Ноздрӗв суйма, хушса калама, сӑмах сарма пултарать, темӗнле елексем те тухса кайӗҫ... Аван мар! Аван мар," Тӑр ухмах епӗ!" терӗ вӑл хӑйне хӑй. Ҫӗрӗпех йапӑх ҫывӑрчӗ. Темӗнле пӗчӗк те чарусӑр чӗрчунсем чӑтма ҫук хытӑ ҫыртрӗҫ ӑна. Ҫавӑнпа та вӑл ҫыртнӑ тӗле аллипе ҫатӑрласа тытса: „Сире те Ноздрӗвпа пӗрлех амак тытасчӗ!" тейе-тейе илнӗ. Ирпе вӑл ирех вӑранчӗ. Чи малтан унӑн халатне тата аттине тӑхӑнса, килкарти урлӑ каҫмала та, витене ҫитсе, Селифана халех бричкӑ кӳлсе хатӗрлеме хушмала пулнӑ. Кайала таврӑннӑ чухне вӑл килкартинче Ноздрӗва курчӗ. Ноздрӗв та халатпа пулнӑ, ҫӑварне чӗлӗм хыпнӑ.

Ноздрӗв ӑна йулташла саламларӗ те, мӗнле ҫывӑрни ҫинчен ыйтрӗ.

„Нимлех те мар" тесе тавӑрчӗ Чичикӑв сиввӗн.

„Епӗ тата, тӑванӑм" терӗ Ноздрӗв: „ҫӗрӗпех ирсӗр тӗлӗксемпе аташса выртрӑм, каласа кӑтартма та аван мар. Ӗнертенпе вара ҫӑварта ескадрон ҫӗр каҫнӑ пекех туйӑнать. Пӑх-ха, хама хӗнени ҫинчен тӗлӗк курнӑ, йей, йей! Пӗлетни камсем? Вӑт, нийепле те пӗлеймӗн: штабсротмистр Поцелуйӗвпа Кувшинникӑв иккӗшӗ".

„Апла еппин" тесе шухӑшларӗ Чичикӑв хӑй ӑшӗнче: „чӑннипех тытса хӗненӗ пулсан пит лайӑхчӗ те".

„Тупата! Ҫав тери ыраттармала хӗнерӗҫ. Вӑрантӑм та, шуйттан илесшӗ, чӑнах та темӗн хыҫкаланас килет, тухатмӑш пӑрҫисем пулас, канлӗх памаҫҫӗ. Еппин ес кай хаҫ, тумлан; еп часах сан патна пырӑп. Ирсӗр прикащӗке ҫеҫ кӑшт хӑтӑрмала."

Чичикӑв тумланма тата ҫӑвӑнма пӳлӗме кӗчӗ. Ҫавӑн хыҫҫӑн вӑл столовӑйа тухрӗ: унта сӗтел ҫинче чей ӗҫмели савӑт-сапа тата пӗр бутылкӑ ром ларнӑ. Пулӗмре ӗнерхи кӑнтӑрлахи апатпа каҫхи апат йӗрӗсем пулнӑ. Урай шӑлмали щоткине тытса та пӑхман иккен. Урайӗнче ҫӑкӑр тӗпренчӗкӗсем йӑваланса выртнӑ, скатӗрт ҫинче табак кӗлӗ курӑннӑ Хуҫи часах ҫитрӗ. Ҫийӗнчи халачӗ айӗнче унӑн уҫӑ кӑкӑрӗсӗр пуҫне урӑх нимӗн те пулман, кӑкӑрӗ ҫинче темле сухал ҫитӗннӗ. Чӗлӗм чӑпӑкне аллинчен пӑрахмасӑр чей ӗҫекенскер вӑл, ҫӳҫ касакансен вывӗски ҫинчи пек, ҫӳҫӗсене кӑтралатнӑ йе шакла кастарнӑ улпутсемшӗн антӑхакан живописец выҫҫи пит аван пулнӑ пулӗччӗ

— „Ну, мӗнле шухӑшлатӑн-ха ӗнтӗ?" терӗ Ноздрӗв кӑшт чӗнмесӗр тӑнӑ хыҫҫӑн: „чунла выҫас теместӗн апла?"

„Еп малтанах ка рӑм сана, тӑванӑм, выҫамастӑп тесе: туйӑнма-халех туйӑнатӑп."

„Сутасшӑн мар епӗ: йулташла пулмасӗ апла. Тем амак сутса усӑ курасшӑн мар еп. Банка лартас пулсан—ӗҫӗ те урӑхла. Пӗрре выҫаса илер ӗнтӗ"

„Епӗ малтанах каларӑм вӗт, выҫамастӑп тесе".

„Улӑштарасшӑн та мар-и?"

„Ҫук."

„Йтле, выҫар шашкӑла, выҫаса илсен—пурте сан пулать. Манӑн унашкал ревизирен кӑлармалисем нумай вӗт. Ей, Порфири, шашечницӑна илсе кил-ха кунта."

„Тӑрашни те ахалех пулӗ: пурӗ-пӗр выҫас ҫук епӗ"

„Ку вӗт банкӑла мар. Кунта нимӗнле телей те, суйалӑх та пулма пултараймасӗ: пӗтӗмӗшпех пултарулӑхран килет, малтанах каласа п рам-ха, епӗ нимӗн те выҫама пӗ местӗп вӗт, кирек мӗнле ҫӑмӑлӑх парсан, выҫакалӑп тен."

„Выҫас"—тесе шухӑшларӗ Чичикӑв хӑй ӑшӗнче,—выҫам унпа, шашкӑла начарах выҫакан марччӗ-ха епӗ, ултавпа ҫийеле тухма йӑвӑртарах пулӗ ӑна".

„Йурӗ, ес каланӑ пек пултӑр. Шашкӑла выҫатӑп".

„Чунсем ҫӗршер тенке кайаҫҫӗ".

„Мӗншӗн апла? Алӑшер тенке кайсан та ҫитет".

„Ҫук, пысӑк сум-и вӑл 50 тенкӗ? Ун ҫумне еп

пĕр-пĕр вăтамрах йытă çӳри йе часси ваљљи пĕр-пĕр ылтăн шăкăр-макăр хушса парам."
„Йурĕ еппин!" — терĕ Чичикăв.
„Миçе тенкĕ мала паратăн ес мана" терĕ Ноздрĕв.
„Мĕне кура? Паллах, нимĕн те памастăп."
„Сахалтан та, малтан икĕ хут сиксе илем хăť."
„Кирлĕ мар, еп хам та начар выљљатăп."
„Пĕлетпĕр-çке есĕр мĕнле начар выљљанине!" терĕ Ноздрĕв, шашкине куçарса.
„Нумай пулаť ĕнтĕ алла шашкă тытмани!" терĕ Чичикăв та, шашкине куçарса.
„Пĕлетпĕр-çке есĕр мĕнле начар выљљанине!" терĕ Ноздрĕв, шашкине шутарнă май.
„Нумай пулаť ĕнтĕ алла шашкă тытманни!" терĕ Чичикăв шашкине куçарса.
„Пĕлетпĕр-çке есĕр йепле начар выљљанине!" терĕ Ноздрĕв, шашкине шутарнă май, çав вăхăтрах çанни вĕçĕпе хăй тепĕр шашкине вырăнтан куçарчĕ.
„Нумай пулаť алла шашкă тытманни!.. — Ее! тăванăм ку мĕскер тата? Кайала илсе ларт-ха ăна!" терĕ Чичикăв.
„Кама?"
„Шашкуна" терĕ Чичикăв, çав вăхăтрах хăйĕн сăмси айĕнчех тепĕр шашкă ларнине курчĕ, дамка тухма пуçланă пекех туйăнчĕ вăл уншăн: ăçтан вăл унта пырса çакланнине пĕр турă кăна пĕлнĕ „Çук!" — терĕ Чичикăв сĕтел хушшинчен тăрса.
„Санпа нийепле те выљљама май çук. Виçĕ шашкăпа пĕр тăрук çӳремеççĕ!"
„Мĕншĕн виççĕпе? Вăл йăнăш пулчĕ. Пĕри сарăмсăр куçнă, ăна кайала илсе лартăп.
„Тепри ăçтан пырса ларнă тата?"
„Хăшĕ вăл тепри?"
„Дамка тухаканни?"
„Ак тамаша! Астумастăн пулаť ĕнтĕ!"
„Çук, тăванăм, ăçтан çӳренине еп йăлтах шутларăм, лайăх астăватăп, ăна ес халљ çеç пырса лартрăн. Ав ăçта пулмала ун вырăнĕ."
„Йепле унта?" терĕ Ноздрĕв кăштах хĕрелсе: тăванăм, курап та сана, сочинитĕл пулмала есĕ."
„Çук, тăванăм, есĕ ху сочинитĕл пулас та: анчах вырăнсăр хăтланатăн!"
„Кам тесе шутлан есĕ мана? Ултталас пури вара епĕ?" терĕ Ноздрĕв.
„Еп сана никам тесе те шутламастăп, анчах урăх нихăçан та выљљамастăп."
„Çук, вăййа пăрахма пултараймастăн" — терĕ Ноздрĕв хĕрсе: „вăйă пуçланнă!"
„Пăрахма пултаратăп епĕ, мĕншĕн тесен есĕ тӳр çын пек выљљамастăн?"
„Ан суй, апла калама пултараймастăн ес!"
„Çук, тăванăм, есĕ ху суйатăн".
„Еп ултталаман, есĕ те вăййа пăрахма пултараймастăн: пуçланă вăййа пĕтермелех санăн".
„Апла тума хушаймастăн ес мана" терĕ те Чичикăв лăпкăн, шашкă хăми патне пырса шашкисене хутăштарса йачĕ.
Ноздрĕв чăрсăрланса карĕ, Чичикăв патнех пырса тăчĕ, лешĕ вара икĕ утăм кайала чакрĕ.
„Епĕ выљљаттаратăпах сана! Есĕ шашкăсене пăтраштарни темĕнех мар-ха. Епĕ ăçта çӳренисене пурне те астăватăп, вĕсене епĕр пасăрхи пекех вырнаçтарса лартăпăр".
„Çук, тăванăм, ĕç пĕтрĕ; выљљамастăп еп санпа".
„Выљљасшăн мар еппин?"
„Хăвах куратăн, санпа выљљама май çук".
„Асту, кала тӳррипех, выљљасшăн мар-и, ес?" терĕ Ноздрĕв тата патнерех çывхарса.
„Выљљасшăн мар!" терĕ Ноздрĕв, хăй мĕн те пулин пуласран хăраса ик аллине пичĕ патне тытрĕ. Еç чăнахах та шала кĕме пуçларĕ. Кун пек асăрханни пит те вырăнлă пулчĕ, мĕншĕн тесен, Ноздрĕв аллипе сулса та йаначчĕ... пирĕн геройăн тулли те чипер пит çăмартисенчен пĕри çусан та тасалми намăспа витĕннĕ пулĕччĕ, анчах, çапнине сирсе йанă хыççăн, Чичикăв Ноздрĕвăн чăрсăр аллисене çăлса илчĕ те хытă тытса тăчĕ.
„Порфири, Павлушкă!" тесе чĕнчĕ хайаррăн Ноздрăв, вĕçерĕнме хăтланса.
Çав сăмахсене илтсен, Чичикăв, ку мăшкăл сценăна дворовăйсем ан курччăр тесе, тата Ноздрĕва тытса тăни усăсăррине кура, аллисене вĕçертрĕ. Çав вăхăтрах Порфирипе пĕрле патмар Павлушкă чупса кĕчĕç, вĕсемпе çыхлансан паллах усăлă пулас çук.
„Апла есĕ выљљаса пĕтересшĕн мари-ха" терĕ Ноздрĕв: „кала тӳррипе!"
„Вăййа пĕтерме май çук" терĕ те Чичикăв, кантăкран пăхрĕ, хăйĕн кӳлсе хатĕрленĕ бричкине курчĕ; Çелифанĕ те чĕнсенех крыљца умне чуптарса пыма хатĕр пулнă, анчах пӳлĕмрен тухма нийепле те май килмен. Алăк патĕнче икĕ патмар крепостной ухмах тăнă.
„Апла есĕ выљљаса пĕтересшĕн мар иккен?" терĕ Ноздрĕв. Пит çăмартисем хăйĕн вут пек çунаççĕ.
„Хăв тӳрĕ çын пек выљљанă пулсан урăхлаччĕ... халљ выљљама пултараймастăп".
„А! ес пултараймастăн апла, усал! Хăвăн ăнманнине куртăн та, пултараймастăн! „Хĕнĕр ăна! тесе нимне пĕлмесĕр кăшкăрса йачĕ вăл Порфирипе Павлушă çине пăхса, хăй аллине черешљă чăпăк йарса тытрĕ.
Чичикăв пир пек шуралса кайрĕ. Вăл темĕн каласшăн пулчĕ, анчах сасси тухмасť, тути хĕррисем кăна чĕтресе тăраççĕ.
„Хĕнĕр ăна!" тесе кăшкăрчĕ Ноздрĕв, хăй чĕрĕшљă чăпăкĕпе малала тăлпăнчĕ, йăлт вĕриленсе, тарласа кайрĕ, никам илейми крепăçе тапăнна чухнехи пек хăтланаť. „Хĕнĕр ăна!" тесе кăшкăраť вăл каллех. Хăшпĕр чăрсăр поручик чăн пысăк приступа кайнă чухне хăйĕн взводне: „Малала, ачасем!" тесе кăшкăрни пекех илтĕнет унăн сасси. Ун пек поручикăн ухмахла хăйулăхне тахçанах пит аван пĕлсе çитнĕ, çавăнпа та хĕрӳ ĕç вăхатĕнче унăн аллисене тытса тăма йурийех пирказ параççĕ. Анчах пирĕн поручике хăйĕн çапăçу хастарлăхне ытлашшипех туйса илнĕ-мĕн çавăнпа унăн пуçĕ те пĕтĕмĕшпех çаврăнса кайнă, ун умĕнче Суворăв, вăл чи пысăк ĕç пуçараť. „Ачасем, малала!" тесе кăшкăраť поручик тăлпăнса; приступăн пĕр çирĕп планне пăснине те, пĕлĕтсенчен çӳле çĕкленекен крепăçăн пысăк стенисем витĕр мĕлйуншер пăшал кĕпçи кăларса тăратнине те, хăйĕн вăйсăр взвочĕ сывлăша мамăк пек сирпĕнсе кайассине те тата кăшкăрма йуратакан чарусăр карланкине хупса лартакан пуљă сывăхала шăхăрса вĕçсе пынине те туймасť хăй. Ноздрĕв çав пуçне çухатса йанă хăйулă поручик крепăç çине тапăнни пек хăтланнă пулсан, анчах вăл тапăнакан крепăç пĕрре те патне пымала мар харушă крепăç пек пулман. Пачах урăхла, крепăç çав тери хăраса ӳкнĕ, чунĕ те унăн ура кĕллинех

çитсе ларнă. Хăйне хÿтлеме йарса тытнă пуканне те дворовăйсем ун аллинчен такçанах туртса илнĕ; кусĕсене хĕстерсе лартса, ни чĕрĕ, ни вилĕ тăнă вăл, хуçин черкес чăпăкне тутанма хатĕрленсе. Малала мĕн пулма пултарнине турă çеç пĕлет, анчах пуласси пирĕн геройăн айак пĕрчисене, хулпуççийĕсене тата ырă çитĕннĕ кĕлеткин ытти пайĕсене çăлса хăварасшăн пулнă мĕн. Кĕтмен çĕртен, пĕлĕтсем çинчен тенĕ пек, сасартăк шăнкăрав сассисем илтĕнсе кайнă, крыльца патнеле вĕçтерсе пыракан урапа сасси те уççăнах илтĕннĕ, çитменнине тата çитсе чарăннă тройкăри хĕрсе кайнă утсем йăвăррăн сывласа йани те хăлхана пырса çапăннă. Çавăнпа вĕсем ирĕксĕрех пурте кантăкран пăхрĕç: çав вăхăтра çурри çарла, çурри килти майлă çуртук тăхăннă темле уссилĕ çын урапа çинчен аннă. Передньăйра ыйтса пĕлсен, вăл çав самантрах пырса та кĕчĕ. Чичикăв хăранипе ăнакăна та тавçарса илеймерĕ, çавăнпа ун çине пăхма та пит кичем пулнă.

„Пĕлесчĕ манăн, хăшĕ кунта Ноздрĕв?"—терĕ палламан çын, пĕрре—чăпăк тытса тăракан Ноздрĕв çине, тепре йерипен шайсăрлăхран тухса пыракан Чичикăв çине темле тĕлĕнсерех пăхса.

„Тăхтăр-ха, кампа калаçма тÿрĕ килет? тесе ыйтрĕ Ноздрĕв, ун умнерех пырса.

„Капитан—исправникпе."

„Мĕн кирлĕ вара сире?"

„Сирĕн ĕç суд аллинчи çинчен хыпар çитрĕ ман пата, епĕ сире çавăн çинчен каласа пама килтĕм, хăвăр ĕçÿ пирки решени пуличчен сире суд аллинчен хăтармаççĕ".

„Ун пек пулма пултараймасть, мĕнле ĕçпе вăл? терĕ Ноздрĕв.

„Есĕр ку историне, ÿсĕр пуçпа, Макçимăв помешчике розгăпа çапса кÿрентернĕшĕн хутшăнса кайнă."

„Суйатăр! Макçимăв помешчика епĕ куçпа та курман."

„Милостивăй государ! калама ирĕк парăр, епĕ офицер, çавăнпа та ку сăмаха есĕр мана мар, хăвăрăн тарçуна çеç калама пултараттăр!"

Çав вăхăтра Чичикăв, Ноздрĕв мĕнле ответ парассине кĕтмесĕрех, йăпăр-йапăр çĕлĕкне илчĕ те капитан-исправник çурăмĕ хыçĕпе крыльцана сиксе тухрĕ, унтан бричкă çине ларчĕ те, Селифанне, лашисем мĕн чухлĕ кайма пултарнă таран хăвалама хушрĕ.

**Илпек куçарнă.**

# ЕРНЕРЕ ÇИЧĔ КУН

Халлап та мар ку. Йумах та мар. Чăн пурнăçран илсе çырнă тĕрленчĕк. Турхан районĕнче Аслă Арапуç йатлă йал пур. Çав йалта Михайлăв хушаматлă пуп пурăнать. Итлĕр. Çав пупăн дневникне вулама пуçлатпăр.

## Вырсарникун

Пайан çăмăл кун. Хам çуралнă кун Кăнтăрлахи кĕлĕрен тухсан, киле килмесĕрех, Кирук патне кĕрсе лартăм. Хăй алăк хыçĕнчи сак çинче тайăнса выртатчĕ. Арă ĕ кăмака умĕнче темĕскер айланать. Иртнĕ кĕркунне çеç утма пуçланă пĕчĕк ачи сĕгел хушшинче кушак çăвăрне макăртса ларать. „Сывлăхăрсем пур-и?" – тесе ыйтрăм кĕрсенех. „Пур-ха, пурăнкалатпăр" — терĕ Кирук. Унтан вăл выртнă çĕртрен тăрса авăнчăк чăпăклă чĕлĕмĕ ăшне табак тултарма пуçларĕ. „Кĕлле çÿреме пăрахрăн-çке? — тесе ыйтатăп Кирукран. — Арăму та çÿреместь". Вăл манăн çине пăхрĕ те: „Çÿрейместĕп çав... Укçа çук... Тумтирсем те начар"— тесе хучĕ. „Вара мĕншĕн-ха халиччен те колхоза кĕместĕн?"—тетĕп епĕ.—Уйрăм хуçалăхпа пурăнса нихăçан та лайăх пурнăç тума пултараймăн". Арăмĕпе иккĕш те тĕлĕннĕ пек пулчĕç. „Есĕ пуп вĕт?— терĕç вĕсем пĕр харăс. — Есĕ те колхоза кÿртессишĕн агитацилетĕн-и?" „Сисмерĕр те-и?—терĕм епĕ. — Ахаль çеç каларăм вĕт. Конешнă... Ами-ин".

## Тунтикун

Пайан савăнăçлă кун. Хам пупа тухнă кун. Унтанпала миçе пин укçа кĕрсе выртман-ши манăн кĕсйене? Шел. Шутласа пыман. Куçма патне кайса лартăм. „Мĕнле пурăнатăн-ха... Колхозран тухма шутламастăни-ха?"— тесе ыйтрăм. „Мĕншĕн йалан çапла калатăн есĕ? Мĕншĕн мана колхозран кăларасшăн?" — терĕ вăл тарăхнă пек пулса.

Куçма самантлăха чĕнмесĕр ларчĕ. Унтан: „Акă, ывăлтан ыйт" — терĕ вăл урайĕнче пĕчĕк автомобил туртса çÿрекен тăвата çулхи ывăлĕ çине кăтартса. „Вăл мĕн пĕлет, — терĕм епĕ.—Тĕне те кĕмен. Унпа калаçма та çылăх". Ача манăн вăрăм çилхе çине тинкерсе пăхрĕ те: „Мĕн вăл çылăх?" тесе ыйтрĕ. Епĕ ăнлантарма пикентĕм. Анчах ашшĕ чарчĕ:„Ан сÿпĕлтет, — терĕ вăл. — Ачана пăсма пултаратăн". Усал çав. Хутла сахалтарах пĕлет пулин те, Куçма ырă çын мар вăл. Пурте ун йеврĕлĕ пулсан, Аслă Арапуçĕнче пурăнма та çук вара мана. Йуратьха, хам хăраххисем пур. Турăсăрсен йачейки те нимĕн ĕçл мест. Вăл та аван. Ан ĕçлетĕрех. Комсомолĕс текеннисем те манăн ĕçсем çине ытлашшийех çаврăнса пăхмаççĕ. Ан пăхчăрах. Начар мар-ха. Питĕ аван Аслă Арапуçĕнче пурăнма.

## Ытларикун

Пайан историлĕ кун. Хам авланнă кун. Мăнастирти манашкăсемпе йе праçвир пĕçерсе пурăнакан арсăр хĕрарăмсемпе чылай çулсем хушши сĕтĕрĕнсе çÿренĕ хыççăн, арăмлă пултăм. Акă вăл сĕтел çинчи машинă умĕнче çĕвĕ çĕлесе ларать. Çпекульантсем кÿрсе панă пусма-таварсенчен кĕпе хатĕрлет... сарапан. Вĕсене пасара тухса хаклă хакпа сутма пулать, йе килех те килса илме пултараççĕ. „Аван-и? Таварĕ аванах-и? — тесе ыйтрăм, арăмăн хулкалакĕнчен тăп-тăп савса. „Аван, — терĕ вăл.—Татах та кÿрсе паратпăр, терĕç-ха". Паччăрах. Çпекульантсемпе килĕшÿлĕ пурăнни кирлĕ. Вĕсем те вĕт ман йеврĕлех: суйма йуратаççĕ... лартма. Ăнланайманнисене чике таранах лартса хăварма пултараççĕ. Вĕсемпе кĕршмеле теççĕ те. Арапуçĕнче ун пек сас-хура илтĕнмест-ха. Аван. Пĕрре те начар мар Аслă Арапуçĕнче пурăнма.

## Йункун

Хĕвел тухнă тухманах Трахвин патне кайса лартăм. Хăй килĕнче çук. „Ăçта тата?“ тесе ыйтрăм уйран уçласа тăракан арăмĕнчен. „Килеймен-ха, — терĕ вăл. — Уйри тырăсене хурал тăрат вĕт“. Кăшт кулса илнĕ хыççăн: „Пĕлетĕп-ха та, — терĕм епĕ.— Каçхине кăна таврăнат пуљ? „Ирхи апатченех, — терĕ вăл.— Часах ак килĕ-ха та“. „Ĕнер каç пулас умĕн куртăм епĕ вĕсене... Уçăлса çÿреме тесе уйа тухнăччĕ те“. „Камсене?“ — тесе ыйтрĕ арăм. „Трахвине куртăм. Каланча çумĕнче Иван арăмĕпе иккĕшĕ пăшăлтатса ларатчĕç. Курăнми пулчĕç кайран“... Арăм пĕрре шуралса, тепре хĕрелсе сăнланчĕ те: „Чăнласах калатăн-и?!“ тесе чĕтревлĕ сасăпа ыйтрĕ. „Мĕншĕн суйас-ха“, терĕм епĕ. Хам та унпала пĕрлех аванмарланнă пек пултăм. Хирĕлет ĕнтĕ. Мĕн каласан та упăшкипе хирĕлсе йатлаçма тытăнат ак...

## Кĕçнерникун

Манăн сăмахсем чăнласах та ахалĕн çухалмарĕç. Пайан ак, Трахвинпе тĕл пулса калаçрăм. Арăмĕ ăна кĕнĕ-кĕменех уйран хурсипе çапса антарма шутланă. Макăра-макăра йатланă. Кулат Трахвин. „Кам мурĕ суйса панă-ши?“ тесе тĕлĕнет. „Вара Иван каланă пулĕ, — терĕм епĕ. — Вĕсем иккĕшĕ каçхине пахчара пăшăлтатса çÿретчĕç... Мунча çенĕхне кĕрсе çухалчĕç“. Пĕрре кăвакарса, тепре хĕрелсе сăнланчĕ Трахвин: „Манăн арăм Иванпала пахча тăрăх çÿренĕ-и? Чăнласах калатăн-и?!“ „Мĕншĕн-ха суйас“, терĕм епĕ. Хам та унпала пĕрлех аванмарланнă пек пултăм. Хирĕлет ĕнтĕ: Мĕн каласан та арăмĕпе хирĕлсе йатлаçма пикенет ак.

## Ернекун

Урамра сĕнксе лараттăм. Çеркей пырса тăчĕ. Питĕ çăмăлскер вăл, чĕлхе выљатма йуратаканскер. Турăсем çинчен кулса калаçат. Манран та кулат. Хам та кулатăп. Мишша арăмĕпе Пракахви арăмĕ Пăла шывĕ хĕрринеле кĕпе çума кайнине сăнарăмăр. „Питĕ килĕштерсе пурăнаççĕ пулĕ çавсем“ — терĕм епĕ. „Килĕштермесĕр, — терĕ Çеркей. — Кÿршĕллех пурăнаççĕ иккен те“. „Çапăçтарас пулат вĕсене“, — терĕм епĕ. — Шÿтшĕнех вĕсен хушшинчи килĕшĕве пăсас пулат“. Çеркей ахăлтатса кулса йачĕ. „Мĕнле?“ — терĕ вăл. „Акă мĕнле: вĕсем иккĕшĕ те уйран-турăхсене пĕр нÿхрепе лартаççĕ. Çапла вĕт? Çапла. Çав нÿхрепе кĕмеле те турăх чÿлмекĕ ăшне ĕнен ăшă тислĕкне йарса хăвармала. Тепĕр кун каллех кĕмеле. Каллех йарса хăвармала. Есĕ ку ĕçе тума пултаратăн, Çеркей! Есĕ çăмăл шăм-шаклă. Вара Пракахви арăмĕпе Мишша арăмĕ хушшинче çилтăвăл тухса кайнине курса кăна тăр. Итле, Çеркей!“ Вăл кулма чарăнчĕ те: „Пулмаст манран, аван мар апла хăтланма“, тесе хучĕ. „Аванах мар та“, терĕм епĕ.

## Шăматкун

Урампала иртсе пыраттăм. Сат çумĕнчи сак çинче виçĕ хĕрарăм темĕскерле тĕлĕнÿлĕн хавхаланса ларaççĕ. Пĕри хаçат вулат. Епĕ те пырса тăтăм. Шмидтсемпе Водопйанăвсем Çурçĕр пољусне вĕççе кайни çинчен калат вулавçă. „Аплах мар пулĕ? — терĕм епĕ. — Ăçтан-ха унта вĕççе çитчĕр, ангĕлсем мар вĕт... Суйса кăна çыраççĕ пулĕ?“. „Есĕ ху суйса, улталаса çÿретĕн, вăрăм çилхе! — тесе ахăрса пăрахрĕ пĕри. — Акă, сан çинчен те çырнă хаçатра. Намăссăр!“ „Кам? Ман çинчен-и?.. Çылăха та пĕлмеççĕ-и?“ Хамах вара вуларăм. „Колхозник Йалавĕ“ хаçат. Ийунĕн 15-мĕшĕнче çапăнса тухнăскер. Аслă Арапуç йалĕнчи Сидуков Гаврилăн тин çуралнă ачине йат хунă чух шыва кÿртнĕ вăхăтра пĕçертсе вĕлернĕ, тесе çырнă. Тĕрĕс-ха та. Вара кам пĕлтернĕ пулат-ха? Прокурорĕ те хăй патнех чĕнтерĕ-ши ĕнтĕ мана? Ой!.. Начар марччĕ Аслă Арапуçĕнче пурăнма!

* * *

Çапла пĕтет Михайлăв хушаматлă пупăн дневникĕ. Вăл ăна таçта хыпаланса иртнĕ чух урам варринех ÿкерсе хăварнă пулнă. Епĕр тупрăмăр вара. Вуласа тухрăмăр.

П. Ламанас.

Секретарь и вып. редактор *И. ИЛЛАРИОНОВ*. Ответлă редактăр *П. И. ИВАНОВ*.

Сдано в производство 22/VI—37 г. Подписано к печати 23/VII—37 г. Уполномоч. Чувашглавлита № 4444. Заказ № 1451

Формат бумаги 58×88м¹/₈ Об'ем 2,5 п. л. Чебоксары, тип. № 1 Чувашгиза. Тираж 4700. Изд. газ. „Канаш“

Хакӗ 40 пус.



ФАШИССЕН ЉОТЧИКӖСЕМ ХУШШИНЧЕ

— Ӑнланмастӑп, мӗн тума Ҫурҫӗр пољусне вӗҫмеле пулнӑ-ха. Унта ҫӳлтен бомбӑ пӑрахса сунтарса йамали пӗр лӑпкӑ йал та ҫук-ҫке!..